РЕСПУБЛИКАН
БИБЛИОТЕКА
им. Горького

ПӖТӖМ ТӖНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПӖРЛЕШӖР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВӖ

СОВЕТ СОЮЗӖНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙӖН ЧӐВАШ ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН ТАТА ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНӐЙ СОВЕЧӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

175 (9854) №

1956 ҫулхи августӑн 26-мӗшӗ, вырсарникун

Хакӗ 20 пус
39-мӗш ҫул тухать.

Предприяти директорӗ

Чӑваш АССР-ӗнче, пӗтӗм ҫӗршыври пекех, хӑйсен тивӗҫне чун-чӗререн юратса пурнӑҫлакан, социализмла промышленноҫа малалла аталантарассишӗн вӑй шеллемесӗр ӗҫлекен директорсем ӳсе ҫитӗнчӗҫ. Шупашкарти электроаппаратура заводне республикӑри ӗҫсыннисем, ҫавӑн пекех СССР Электротехника промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан предприятисенче ӗҫлекенсем аван пӗлеҫҫӗ. Вӑл государство ҫирӗплетсе паракан плансене заданисене яланах чыслӑ пурнӑҫлать, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырать, продукци хӑйне ларакан хакне йӳнетет.

Завод ҫавӑн пек ҫитӗнӳсем тунӑ парти организацийӗ, заводӑн директорӗ М. Ардаматский юлташ коллектива пӗлсе, тӗрӗс ертсе пынипе килет. Нумаях пулмасть правительствӑн ответлӑ заданийӗсене чыслӑ пурнӑҫланӑшӑн СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ М. Ардаматский юлташа орден парса наградӑларӗ.

Патша самани вӑхӑтӗнче рядовой рабочи пулнӑ Н. Арбузов юлташ Улатӑрти йывӑҫ шпаласем тӑвакан комбината 25 ҫул хушши ӗнтӗ ертсе пырать. Вӑл тӑрӑшнипе кунта ҫӗнӗ цехсем уҫнӑ, йывӑр ӗҫсене механизациленӗ. Н. Грибов юлташ директор пулса ӗҫлеме тытӑннӑранпа Атӑл леш енчи торф предприятийӗ плана тултармасӑр ҫул пулман. Директор пулса хӗрарӑмсем те чылай ӗҫлеҫҫӗ. Макарон фабрики директорӗ В. Тазова, Сӗнтӗрти пир-авӑр фабрики директорӗ А. Хорошева юлташсем т. ыт. те предприятисем умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама хӑйсен коллективӗсене пӗлсе ертсе пыраҫҫӗ. Ҫавӑн пек тӗслӗхсем пирӗн тата нумай. Ӑста, пуҫарулӑ хуҫалӑх руководителӗсен кадрӗсем ӳсе ҫитӗнни облаҫри парторганизаци промышленноҫа аталантарас тӗлӗшпе партин задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласа пыма май парать.

Предприяти директорӗн аллине пирӗн государствӑн пысӑк пуянлӑх шанса панӑ. Ҫак пуянлӑхпа тӗрӗс усӑ курасси, ӑна нумайлатса пырасси, предприяти умӗнче тӑракан задачӑсене ӑнӑҫлӑ пурнӑҫласси директортан нумай килет. Директор—производствӑна тӳрех ертсе пыракан командир. Директор Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин решенийӗсене чыслӑ пурнӑҫлама, государство интересӗсене сыхлама, производство экономикипе техникине лайӑх пӗлме тивӗҫлӗ.

Совет халӑхӗ директорсене хисеплет, вӗсен ӗҫне пысӑка хурса хаклать. Чи пуҫарулӑ та пултаруллӑ директорсене халӑх СССР, союзлӑ республикӑсен, автономиллӗ республикӑсен Верховнӑй Совечӗсен тата хула Совечӗсен депутатне суйлать, правительство—орденсем тата медальсем парса наградӑлать.

Производствӑпа хуҫалӑха пӗлсе ертсе пырассишӗн, хӑйне шанса панӑ пуянлӑхпа тӗрӗс усӑ курассишӗн пӗтӗмпех ответлӑ пулма директорӑн пысӑк правасем пулмалла. КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, ҫулталӑк каярах СССР Министрӗсен Совечӗ предприяти директорӗсен прависене пысӑклатма йышӑнчӗ. Ҫавӑн хыҫҫӑн республикӑри нумай директорсен пуҫарулӑхӗпе ответлӑхӗ ӳсрӗ. Ҫакна промышленность, пӗтӗмӗшпе илсен, государство планӗсене ӑнӑҫлӑ тултарса пынинчен, чылай предприятисенче производствӑна улӑштарса ҫӗнетес тата пысӑклатас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса ирттернинчен лайӑх курма пулать. Промышленность иртнӗ ҫулхи тата кӑҫалхи ҫичӗ уйӑхри планран ирттерсе вуншар миллион тенкӗлӗх продукци туса кӑларчӗ.

Правительство предприяти директорӗсене становсемпе машинӑсене улӑштарса ҫӗнетме, ҫӗнӗ техника туянса вырнаҫтарса лартма, цехсем ҫӗнӗрен уҫма, йывӑр ӗҫсене механизацилеме, малта пыракансен опычӗпе меслетне тӗпчесе вӗренме работниксене ытти хуласемпе заводсене командировкӑна яма ирӗк панӑ. Ҫавсене пурнӑҫлама укҫа-тенкӗ ҫитменсен предприятисем банкран кивҫен укҫа-тенкӗ илме пултараҫҫӗ. Ҫак паха майпа республикӑри чылай предприятисем усӑ кураҫҫӗ. Шупашкарти пиравӑр комбиначӗ, ликерпа эрех завочӗ, сӑрӑ завочӗ банкран кивҫен илнӗ укҫа-тенкӗпе хӑшпӗр йывӑр ӗҫсене механизациленӗ. Макарон фабрики—ҫӗнӗ оборудовани туянса ӗҫе янӑ. Первомайски крахмал завочӗ (директорӗ В. Исаев юлташ) ҫӗнӗ цех, котельнӑй лартнӑ, сушилка тума хатӗрленет. Ку завода пӗтӗмпех тенӗ пек улӑштарса ҫӗнетнӗ.

Вӑрнар, Комсомольски, Пӑрачкав, Первомайски райпромкомбиначӗсем, банкран кивҫен укҫа-тенкӗ илсе, кирпӗч завочӗсем лартаҫҫӗ. Сӗмӗрлери кирпӗч завочӗ ҫӗнӗ кӑмака тӑвать. Кӑҫалхи ҫур ҫулта Промбанкӑн республикӑри кантурӗ халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине аталантарма вырӑнти промышленноҫла апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность предприятийӗсене пӗр миллион тенкӗ ытла укҫа кивҫен панӑ. Унсӑр пуҫне Госбанк, Торгбанк тата Коммунальнӑй банксем енӗпе те предприятисене чылай пулӑшу панӑ.

Кунпа пӗрлех ҫакна йышӑнас пулать: республикӑри чылай предприятисен директорӗсем хальхи лару-тӑру хушнӑ пек ҫине тӑрса ӗҫлемеҫҫӗ, хӑйсен тивӗҫне чыслӑ пурнӑҫламаҫҫӗ. Предприятисенчен виҫҫӗмӗш пайӗ кӑҫалхи пӗррӗмӗш ҫур ҫулхи плана тултарса ҫитереймерӗҫ, июль уйӑхӗнче вара ҫавӑн пек предприятисен шучӗ чакма мар, татах ӳсрӗ. Юлса пыракан предприятисем уйрӑмах строительство материалӗсем тӑвакан тата вӑрман промышленноҫӗнче, ҫавӑн пекех промысла кооперацийӗнче нумай. Чылайранпа ӗнтӗ Вӑрмарти сӗтел-пукан фабрики япӑх ӗҫлет. Сӗмӗрлери сӗтел-пукан комбиначӗ, экстракт завочӗ, сӗтел-пукан фабрики, Иваневӑри кирпӗч завочӗ тата ытти хӑшпӗр фабрикӑсемпе заводсем Тӑван ҫӗршыв умӗнче парӑма кӗчӗҫ.

Пирӗн промышленноҫа тата хӑвӑртрах аталантарма, халӑха кирлӗ япаласем туса кӑларассине вӑйлатма чӗртавар, топливо, ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ. Хуҫалӑх руководителӗсем, министерствӑсемпе управленисем тата хула Совет исполкомӗсемпе райисполкомсем пуҫаруллӑрах пулни ҫеҫ кирлӗ. Предприяти директорне пысӑк правасем панӑ. Вӑл совет законӗсемпе килӗшӳллӗн приказсем, распоряженисем пама, работниксене ӗҫе илме е ӗҫрен кӑларма, укҫа-тенкӗпе материалсене расходлама пултарать. Анчах ҫакӑ вӑл директор хӑйӗн ӗҫӗнче активпа, коллективпа тачӑ ҫыхӑнса тӑмалла маррине пӗлтермест. Пачах урӑхла, массӑсен шухӑш-кӑмӑлӗпе сӗнӗвӗсене пурнӑҫлама тӑрӑшакан, критикӑна хисеплекен руководитель ҫеҫ ӑнӑҫлӑ ӗҫлеме пултарать, ҫавӑн пек ертсе пыракан работнике ҫеҫ ӗҫсыннисем юратаҫҫӗ. Малта пыракан директорсем рабочисен пӗрлехи пухӑвӗсенче, производствӑлла канашлусенче, цехсенче, общежитисенче час-часах пулаҫҫӗ, докладсем, лекцисем, калаҫусем ирттереҫҫӗ, рабочисене тӑтӑшах йышӑнаҫҫӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗ пуҫарнипе ҫӗршывра уйрӑм ҫынна ытлашши пысӑка хурас йӑлана хирӗҫ тата унӑн сиенне пӗтерессишӗн кӗрешӳ вӑйланчӗ. Ҫак политика тӗлӗшӗнчен питӗ пысӑк ӗҫе хӑшпӗр юлса пыракан ҫынсем тӗрӗс мар ӑнланаҫҫӗ, руководительсен, тӗслӗхрен, директорсен ролне чакарма пӑхаҫҫӗ е вӗсен приказӗсемпе распоряженийӗсене пурнӑҫлассине хӑйсен тивӗҫӗ тесе шутламаҫҫӗ. Ленин халӑх ҫинчен тата парти ролӗ ҫинчен вӗрентни коммунизм строительствинче пирӗн руководительсен ролне тата авторитетне чакармалла тенине пӗлтермест. Промышленность умӗнче тӑракан пысӑк задачӑсем предприяти директорӗсен прависемпе ответлӑхне тата ытларах ӳстерме, единоначали принципне ҫирӗплетме хушаҫҫӗ.

Предприятисенчи парторганизацисен, КПСС Уставӗ панӑ правӑпа усӑ курса, директорсен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑмалла, вӗсен ӗҫӗнче тӗл пулакан йывӑрлӑхсене пӗтерме пулӑшмалла. Директорсене коммунистла воспитани парас, вӗсен экономикӑлла пӗлӗвне ӳстерес, малта пыракан предприятисен, производство новаторӗсен опычӗпе паллаштарас тӗлӗшпе министерствӑсемпе управленисен тата КПСС хула комитечӗсемпе райкомсем хӑйсен ӗҫне вӑйлатма тивӗҫлӗ.

Ростов облаҫӗнчи колхозсемпе совхозсем государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ

Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XX съезчӗн историлле решенийӗсене пурнӑҫласа, государство ытларах та ытларах пысӑк пулӑшу пани ҫине таянса, Ростов облаҫӗнчи колхозсемпе совхозсем кӑҫал лайӑх тухӑҫлӑ тырӑ ӳстернӗ, тырпула кӗске вӑхӑт хушшинче пухса кӗртнӗ, государствӑна тырӑ памалли плана срокчен тултарнӑ.

План тӑрӑх облаҫри колхозсемпе совхозсен государствӑна 54,3 миллион пӑт тырӑ памалла пулнӑ, вӗсем августӑн 24-мӗшӗ тӗлне государствӑна 58 миллион пӑт тырӑ панӑ тата сутнӑ.

Хӑйсен мӗн тума май пуррине шута илсе, Ростов облаҫӗнчи тырпул тӑвакансем государствӑна татах та ҫичӗ миллион пӑтран кая мар тырӑ пама обязательство илнӗ.

Колхозсемпе совхозсем хӑйсем валли кӗрхи тырӑсен тата ытти пӗрчӗллӗ культурӑсен вӑрлӑхӗсене ҫителӗклӗ хатӗрленӗ, ӗҫ кунӗсем тӑрӑх колхозниксене тырӑ валеҫсе параҫҫӗ.

Кӑҫал Дон тӑрӑхӗнчи уй-хирсенче чи малтанхи хут тырпула ҫулса пӑрахнипе пултарса пухса кӗртес меслетпе анлӑ усӑ курнӑ, ҫавна май тырӑ вырса пухмалли срока чылай кӗскетнӗ тата тырӑ тӑкаланни сахалтарах пулнӑ.

Ялхуҫалӑхӗнчи работниксене тырпул пухса кӗртессипе государствӑна тырӑ парассине пурнӑҫлас ӗҫре Ростов, Таганрог, Новочеркасск, Батайск, Азов, Сальск хулисенчи, район центрӗсемпе рабочи поселокӗсенчи ӗҫсыннисем пысӑк пулӑшу панӑ.

Тырпул пухса кӗртес ӗҫе ӑнӑҫлӑ вӗҫлесе, облаҫри МТС-семпе совхозсем ҫӗршывӑн хӗвелтухӑҫӗнчи районӗсене 2.725 комбайн, 1.340 лафет, 1.250 подборщик ярса панӑ. Тырпул пухса кӗртес ӗҫре пулӑшма Ростов облаҫӗнчи МТС-семпе совхозсенчен Казахстана, Алтай крайне тата Новосибирск облаҫне комбайнерсемпе механиксем 3.000 ҫын, шоферсем 350 ҫын кайнӑ.

СССР Министрӗсен Советӗнче

В. И. Ленина чысласа лартакан памятнике—Советсен Дворецне тӑвас ӗҫ 1941 ҫулта, Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пуҫламӑшӗнче чарӑнса ларнӑ. Халӗ строительство ҫӗнӗрен пуҫланнӑ. Советсен Дворецӗн хальхи проектне ҫирӗм ҫула яхӑн каялла тунине шута илсе, СССР Министрӗсен Совечӗ В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн чи лайӑх проектне тума Пӗтӗм Союзри конкурс ирттересси ҫинчен постановлени йышӑннӑ.

Конкурсра В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн проектне тӑвас тӗлӗшпе ирттереҫҫӗ. Памятник архитектура енӗпе халӑха ҫывӑх, ӑнланмалла пулмалла, ӑна нумай ҫынсем пухӑнма юрӑхлӑ тумалла. Кунта ҫакна шута илнӗ: юлашки вӑхӑтра пирӗн ҫӗршывра архитектурӑпа строительство умне лартакан требованисем чылай ӳсрӗҫ, архитекторсен, инженерсен тата строительсен пысӑк квалификациллӗ кадрӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ, строительствӑра пысӑк опыт пухнӑ, ҫӗнӗ материалсемпе, конструкцисемпе тата инженернӑй оборудованипе усӑ кураҫҫӗ.

Пирӗн Тӑван ҫӗршыв столицинче—Мускавра тӑвакан Советсен Дворецӗ Совет государствине Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн никӗсне хывнӑ аслӑ В. И. Ленина чысласа лартакан памятник пулать. Ана СССР Верховнӑй Совечӗпе РСФСР Верховнӑй Совечӗн сессийӗсемпе ларӑвӗсене ирттерме, конгрессем, съездсем, пухусем, канашлусем ирттерме, праҫниксем, политикӑлла тата культурӑлла ытти массӑлла ӗҫсем ирттерме тӑваҫҫӗ.

В. И. Ленин памятникӗ—Советсен Дворецӗ архитектурӑн чаплӑран та чаплӑ произведенийӗ, советлӑ социализмлӑ культурӑн пысӑк принципӗсемпе пӗтӗмпех килӗшсе тӑракан мӑнаҫлӑ памятник пулмалла.

ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗ *ҫапла йышӑннӑ:*

1. В. И. Ленинӑн Мускавра лартакан памятникӗн—Советсен Дворецӗн чи лайӑх проектне тума Пӗтӗм Союзри уҫӑ конкурс ирттерес.

Уҫӑ конкурс ирттернипе пӗрлех хупӑ конкурс ирттерес, В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн 15—20 проектне тума хушас, ҫак ӗҫе паллӑ архитекторсемпе скульпторсем хутшӑнмалла.

2. В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн чи лайӑх проектне тӑвас тӗлӗшпе ирттерекен конкурс программипе условийӗсене ҫирӗплетес.

В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн Пӗтӗм Союзри уҫӑ конкурсне тӑратакан чи лайӑх проекчӗсемшӗн памалли ҫакӑн пек премисем тӑвас:

пӗррӗмӗш преми — 100.000 тенкӗ,
иккӗмӗш икӗ преми — 50.000-шер тенкӗ;
виҫҫӗмӗш виҫӗ преми — 25.000-шер тенкӗ,
хавхалантармалли вунӑ преми — 10.000-шер тенкӗ.

3. В. И. Ленин памятникӗн—Советсен Дворецӗн чи лайӑх проектне тӑвас тӗлӗшпе конкурс ирттерес ӗҫе СССР Министрӗсен Совечӗн Строительство енӗпе ӗҫлекен государство комитечӗпе СССР архитекторӗсен союзӗ ҫине хурас. Конкурс пуҫланмалли срок—1956 ҫулхи августӑн 25-мӗшӗ, конкурс валли хатӗрленӗ проектсене тӑратмалли срок—1957 ҫулхи февралӗн 25-мӗшӗ.

4. СССР Министрӗсен Совечӗн Строительство енӗпе ӗҫлекен государство комитетне конкурс результачӗсем енӗпе сӗнӳсене 1957 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне тӑратма хушас. (ТАСС).

СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов Финляндире

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 24-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Паян СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов тата унпа пӗрле ҫӳрекенсем Хельсинки патӗнчи чул сӑртлӑ утравсем хушшинче курса ҫӳренӗ. Вӗсем «Сису» ятлӑ пӑрҫӗмӗрен карап ҫинче ларса ҫӳренӗ. Карап тапранса кайиччен нумай малтанах пристане Финлянди столицинче пурӑнакансем пухӑннӑ. Ирхине 11 сехет тӗлне пристане СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов, Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен, ССР Союзӗн Финляндири Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ В. З. Лебедев, СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин, СССР Культура министрӗ Н. А. Михайлов, СССР Хут тата йывӑҫран япаласем тӑвакан промышленность министрӗ Ф. Д. Вараксин пырса ҫитнӗ. Карап ҫинче ҫавӑн пекех Финляндин ССР Союзӗнчи Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ Э. Вуори, Финлянди Ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Р. Торнгрен, Оборона министрӗ Э. Скуг, Суту-илӳпе промышленность министрӗ К. Клеемола, Ҫутӗҫ министрӗ Н. Виролайнен, Финанс енӗпе ӗҫлекен пӗррӗмӗш министр А. Симонен тата ытти ҫынсем пулнӑ.

К. Е. Ворошилов карап ҫинчен алӑ сулать. Пристане пухӑннӑ халӑх СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председательне ӑшшӑн саламлать. Халӑх хушшинче «урра!» кӑшкӑрни илтӗнет. Карап причал патӗнчен тапранать те залива кӗрсе каять. Вӑл тӗрлӗ тӗслӗ ялавсемпе илемлетнӗ пӑрахутсем патӗнчен иртсе пырать. Хельсинкири порт пысӑк. Унта Финляндин, ҫавӑн пекех урӑх ҫӗршывсен суту-илӳ карапӗсемпе пассажирсем лартса ҫӳрекен карапӗсем яланах нумай тӑраҫҫӗ.

Ҫул ҫинче «Сису» пӑрҫӗмӗрен Финлянди ҫар карапӗпе тӗл пулнӑ. Карап команди, стройпа йӗркеленсе тӑрса, СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председательне К. Е. Ворошилова тата Финлянди Республикин Президентне У. К. Кекконена ӑшшӑн саламланӑ.

«Сису» карап историлле Свеаборг крепоҫӗ патне ҫывхарса пырать. 50 ҫул каялла ҫак крепоҫре ҫарсем царизма хирӗҫ восстани тунӑ. Крепость валӗ ҫинчен тупӑсемпе 21 хутчен пӗр харӑс переҫҫӗ. Ку вӑл СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председательне К. Е. Ворошилова чысласа панӑ салют. Ҫар оркестрӗ марш калать. К. Е. Ворошиловпа У. К. Кекконена вал ҫинче стройпа йӗркеленсе тӑнӑ гарнизон ҫарӗсем саламлаҫҫӗ.

«Сису» малалла пырать. Карап ҫинчен илемлӗ Хельсинки хули, унӑн ҫывӑхӗнчи ешӗл утравсемпе вӑрмансем курӑнаҫҫӗ. Пӑрҫӗмӗрен чулӑ-сӑртлӑ утравсем хушшинче сехет ҫура яхӑн ишсе ҫӳренӗ. Унтан хӑнасем тата вӗсемпе пӗрле ҫӳрекен ҫынсем пысӑках мар судно ҫине куҫса ларнӑ. Вӑл вӗсене Сиркка утравӗ ҫине илсе ҫитернӗ. К. Е. Ворошилов утрав ҫинчи историлле паллӑ вырӑнсене, унти авалхи сооруженисене курса ҫӳренӗ.

Сиркка утравӗ ҫинчи «Мерениквият» ятлӑ яхт-клуб ресторанӗнче хӑнасене чысласа ирхи апатлану ирттернӗ.

ХЕЛЬСИНКИ, августӑн 24-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Паян Финлянди Республикин Министрӗсен Совечӗ Хельсинкири университетӑн Актовӑй залӗнче СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилова сума суса пынӑ май савӑнӑҫлӑ концерт ирттернӗ. Хельсинки хулинчи симфони оркестрӗ Ян Сибелиус произведенийӗсене, финсен ытти композиторӗсен произведенийӗсене, ҫавӑн пекех Бородинпа Чайковскин произведенийӗсене вылляса кӑтартнӑ. Оркестра Финляндири паллӑ дирижер Тауно Ханникайнен ертсе пынӑ.

Концертра СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ К. Е. Ворошилов, ССР Союзӗн Финляндири Чрезвычайнӑй тата Полномочнӑй Посолӗ В. З. Лебедев, СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Секретарӗ А. Ф. Горкин, СССР Культура министрӗ Н. А. Михайлов, СССР Хут тата йывӑҫран япаласем тӑвакан промышленность министрӗ Ф. Д. Вараксин, В. И. Устинов генерал-майор пулнӑ.

Концертра ҫавӑн пекех Финлянди Республикин Президенчӗ У. К. Кекконен, премьер-министр К. А. Фагерхольм, министрсем: Торнгрен, Симонен, Скуг, Клеемола, Лейно-Ларссон госпожа, Миеттунен, Саари, Виролайнен, Финлянди парламенчӗн депутачӗсем, муниципалитет членӗсем, университет канцлерӗ Мюрберг, университет ректорӗ Равила, общественность представителӗсем, ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин сотрудникӗсем, Совет Союзӗн Финляндири посольствин сотрудникӗсем, пичет представителӗсем пулнӑ.

Государствӑна—тырӑ

Чкалов облаҫӗнчи ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне государствӑна 110 миллион пӑт тырӑ пама пулнӑ. Ҫакӑ вӑл планран чылай пысӑкрах, область тырӑ чи лайӑх пулнӑ 1953 ҫулта панӑ тырӑ хисепӗнчен чылай иртсе каять. Колхозсемпе совхозсем государство пӳлмине 50 миллион пӑт ытла тырӑ хывнӑ. Юлашки кунсенче хӗвелтухӑҫ районӗсенчен тырӑ турттарма пуҫланӑ. Красный Холм, Акбулак, Соль-Илецк тата Павловка районӗсенчи колхозсем тырӑ хатӗрлемелли плана тултарнӑ, государствӑна темиҫешер миллион пӑт тырӑ панӑ. Колхозсем государствӑна нумай тырӑ сутаҫҫӗ. (ТАСС).

Тырпул пухса кӗртес тата государствӑна тырӑ парас ӗҫсенче малта пыракансемпе танлашӑр!

КПСС райкомӗсемпе райисполкомсем тӑратнӑ тӑрӑх, тӗштырӑ культурисем пухса кӗртнӗ, государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ тата хӑйсем валли кӗрхи тырӑ вӑрлӑхӗ хывса ҫитернӗ ҫак колхозсене республикӑри Хисеп хӑми ҫине кӗртнӗ:

ШУПАШКАР РАЙОНӖ ТӐРӐХ

57. **«Победа» колхоз** (председателӗ **Н. А. Антонов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Р. М. Михайлов** юлташ).
58. **Калинин ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **А. Ф. Федоров** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Н. А. Андреев** юлташ).
59. **Куйбышев ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **И. Н. Никитин** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Я. С. Софронов** юлташ).
60. **Щербаков ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **Н. Г. Борисов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Н. А. Александров** юлташ).
61. **«Знамя революции» колхоз** (председателӗ **Н. К. Плотников** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Н. И. Шориов** юлташ).
62. **Фрунзе ячӗпе тӑракан колхоз** (председателӗ **В. П. Радченко** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. И. Николаев** юлташ).
63. **«Память Кирова» колхоз** (председателӗ **Г. М. Михайлов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **В. М. Михайлов** юлташ).
64. **«Гвардеец» колхоз** (председателӗ **А. Е. Ефремов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **Г. П. Павлов** юлташ).
65. **«Правда» колхоз** (председателӗ **А. Н. Кириллов** юлташ, парторганизаци секретарӗ **А. И. Иванов** юлташ).

Канаш районӗ государствӑна тырӑ памалли плана тултарнӑ

Канаш районӗнчи колхозсем августӑн 25-мӗшӗнче государствӑна тырӑ памалли плана 101 процент тултарнӑ.

Натуроплата тата закуп шучӗпе тырӑ парас ӗҫ малалла пырать.

КПСС райкомӗн секретарӗ И. ПЕТРОВ.
Райисполком председателӗ С. СИНИЦЫН.
МТС директорӗ Я. ФЕДОРОВ.

Тырӑ парас ӗҫе хӑвӑртрах вӗҫлемелле

СЕНТӖРВӐРРИ. «Молния» колхоз ӗҫченӗсем кӑҫал начар мар тырпул ҫитӗнтерчӗҫ. Вӗсем 420 гектар ҫинчи ыраша 7—8 кун хушшинче вырса пӗтерчӗҫ, ӑна кӗске вӑхӑтра капансене хыврӗҫ. Анчах та артеле тырӑ вырас ӗҫре МТС-ӑн трактор бригади начар пулӑшать. Ыраш вырма тухиччен чылай малтан МТС колхоза комбайн ярса панӑ, вӑл юсавлӑ пулман пирки 10,8 гектар ыраш, 12 гектар сӗлӗпе тулӑ кӑна вырма ӗлкӗрчӗ. Комбайнер В. Игнатьев хӑйӗн ӗҫне начар пӗлет. Ҫавна май, вӑл ҫур кун тырӑ вырать, кайран тепӗр 3—4 кун хушши комбайн ахаль ларать. Уй-хирти тырпула пухса кӗртессине вӑраха янипе артельте государствӑна тырӑ парас ӗҫ чӑтма ҫук юлса пырать. Ку енӗпе графика малтанхи кунсенчех пӑснӑ. Колхозӑн августӑн 25-мӗшӗ тӗлне государствӑна 697 центнер тырӑ леҫсе памалла пулнӑ. Августӑн 22-мӗшӗ тӗлне 263 центнер кӑна леҫнӗ. Ыраш вырса пӗтернӗренпе кунта чылай вӑхӑт иртрӗ, апла пулин те паянхи куна авӑн ҫапас ӗҫе тивӗҫлипе организацилемеҫҫӗ. Августӑн 20-мӗшӗ тӗлне 104 гектар ҫинчи ыраша, 36 гектар ҫинчи пӑрҫана ҫеҫ ҫапнӑ. Ҫапнӑ тырра, чӗрӗ тесе, государствӑна леҫмесӗр тӑраҫҫӗ. Ӑна типӗтме артелӗн сушилка пур, унпа талӑкра 3—4 тонна тырӑ типӗтме пулать. Анчах сушилкӑпа ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ.

П. ГЕРАСИМОВ.

Ыраш акса пӗтерчӗҫ

ОКТЯБРЬСКИ, августӑн 24-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районти колхозсем кӑҫал 11 уйӑхлӑ пусӑ ҫаврӑнӑшӗ ҫине куҫрӗҫ, ҫавна май тӗштырӑ туса илессине нумай ӳстерчӗҫ. «Путь коммунизма» колхоз членӗсем ҫӗнӗ пусӑ ҫаврӑнӑшӗнче, ытти ҫулхисемпе танлаштарсан, 1.392 центнер тӗштырӑ ытларах пухса кӗртрӗҫ. Пусӑ ҫаврӑнӑшне ҫӗнӗрен йӗркеленипе пула «30 лет Чувашии», «Дружба», «Культура», «Знамя», Чкалов ячӗпе тата Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем те тӗштырӑ туса илессине ӳстерчӗҫ. Кӑҫал районта пур колхозсем те пекех тӑватшар пусӑ ҫаврӑнӑшне кӗрхи тырӑсем акса хӑварчӗҫ. Буденный ячӗпе, Маленков ячӗпе, Чкалов ячӗпе тӑракан, «Победа» колхозсем акакан ҫӗр лаптӑкне 450—470 гектара ҫитерчӗҫ. Халӗ районти колхозсенче кӗрхи ӗҫӗ вӗҫленсе пырать. «Красный Октябрь» артель членӗсем кӗрхи акана районта чи малтан, августӑн 21-мӗшӗнче вӗҫлерӗҫ. Вӗсем планпа пӑхнинчен 61 гектар ыраш ытларах акса хӑварчӗҫ. М. Алексеевпа Ю. Димитриев механизаторсем кунне 30-шар гектар акрӗҫ.

«Свобода», «Родина», Винокуров ячӗпе тӑракан колхозсем те кӗрхи ака ӗҫне пысӑк пахалӑхпа вӗҫлерӗҫ. Чкалов ячӗпе тӑракан тата «Первое Мая» колхозсенче тырра ретлӗ майпа нумай акрӗҫ. Малтан акнӑ 200 гектар лаптӑк ҫинче калча пӗр тикӗс шӑтса тухрӗ.

В. ТРОФИМОВ.

Муркаш районӗнчи «Труд» колхозра тырпула кӗске срокра пухса кӗртрӗҫ. Халӗ артель членӗсем хӗрсех авӑн ҫапаҫҫӗ.

Ӳкерчӗк ҫинче: МТС-ӑн 12-мӗш трактор бригадинчи В. Чернышов комбайнер «Труд» колхозра «С-4» комбайнпа авӑн ҫапать.

А. Прянилов фотоӳкерчӗкӗ.

Уй-хир ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлессишĕн

Шăхасан районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем кăçал уй-хир ĕçĕсене иртнĕ çулхисенчен хăвăртрах та лайăхрах туса пыраççĕ. Çумăрлă çанталăк тăчĕ пулин те нумай колхозсем уйри тырпула пĕр тăккаламасăр вырса пухрĕç. «Память Ильича», «Заря», Мичурин ячĕпе, Ильич ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан колхозсем августăн 20-мĕшĕ тĕлне мĕнпур лаптăк çинчи пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене пухса кĕртрĕç. Халĕ тырпул вырса пухас ĕçе ăнăçлă вĕçлессишĕн кĕрешÿ пырать.

Çав вăхăтрах уйри кĕлтесене турттарса капана хывас, авăн çапас тата государствăна тырă парас ĕçсем те анлăн сарăлса пыраççĕ. Чылай колхозсем Тăван çĕршыв умĕнчи пирвайхи тивĕçе срокчен пурнăçлама пултарчĕç. Вĕсен шутне «Дружба», «Память Ильича», «Заря», «За коммунизм», «Красный Октябрь» колхозсем кĕреççĕ. Район государствăна обязательнăй йĕркепе тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тырри памалли плана августăн 20-мĕшĕ тĕлне 88 процент тултарчĕ.

Районти парторганизаци ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе вăйлатса пыма тăрăшать. Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозсене ертсе пырас ĕçри кивĕ меслете пĕтерме тăрăшаççĕ, колхозсен экономикине тĕпчесе вĕренеççĕ, вĕсене тивĕçлĕ пулăшу параççĕ. Юлашки вăхăтра эпир уйрăмах юлса пыракан колхозсем çине тимлĕ пăхма пуçларăмăр. Вĕсене МТС техника кирлĕ чухлĕ пачĕ. Парти работникĕсем унти пуçламăш парторганизацисене организациллĕ тата политикăлла-массăлла ĕçе лайăхлатма пулăшрĕç.

Уйри тырпула пухса кĕме тытăниччен КПСС райкомĕ пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарне ирттерчĕ. Унта тырпул пухса кĕртес тапхăрти задачăсем çинчен, уйрăмах тырра çĕнĕ меслетпе вырса пухасси çинчен тĕплĕн сÿтсе явнă. Ку ыйтупах колхоз председателĕсемпе ялхуçалăх специалисчĕсен тата МТС механизаторĕсен канашлăвĕсене ирттернĕ. Уй-хир ĕçĕсене тума мĕнле хатĕрленни тата колхозниксем хушшинче агитациллĕ-массăлла ĕçе организацилесси çинчен коммунистсен уçă пухăвĕсенче сÿтсе явнă. Тырпул пухса кĕртес, государствăна тырă парас тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе пыракан колхозсене пама КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне тунă.

Тырă вырма тухнă малтанхи кунсенче государствăна тырă парас тĕлĕшпе мала тухнă «За коммунизм» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулчĕç. Каярахпа ăна малтанхи вăхăтра юлса пынă «Дружба» колхоз (председателĕ А. Гордеев юлташ, парторганизаци секретарĕ Ф. Владимиров юлташ) çĕнсе илчĕ. Ку колхоз августăн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна обязательнăй йĕркепе тата МТС ĕçленĕшĕн натуроплата шучĕпе тырă парса татрĕ. Çав вăхăтрах заяуп шучĕпе 300 пăт тырă сутрĕ.

Тырпула кĕске срокра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес тĕлĕшпе пыракан социализмла ăмăртура мала тухнăшăн панă Хĕрлĕ ялав «Память Ильича» колхозра. Вăл мĕнпур тырпула августăн 19-мĕшĕ тĕлне вырса пĕтерчĕ, августăн 21-мĕшĕнче государствăна тырă парса татрĕ. Çав колхоз районта чи кайра пыракан колхозсенчен пĕриччĕ. Парторганизаципе правлени тырпул вырма тĕплĕн хатĕрленсе тухрĕç, колхозниксен хастарлăхне ÿстерсе пычĕç. Колхоз председателĕ Н. Леонтьев юлташ, ял вăйĕр пин шучĕпе пыйĕкер, хăйĕн организаторла пултарулăхне кăтартрĕ. Тырă вырма тухсан, малтанхи пилĕк кун хушшинче нормăна ирттерсе тултаракансене ĕçшĕн тата 50 процент хушса тÿлемелле тунă. Малта пыракан бригадăсене куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавсем параççĕ. Кулленхи ĕç итогĕсене кăтарту хăми, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем урлă çутатса тăраççĕ. Ялти библиотека заведующийĕ В. Аркадьева ялан уйра пулать, колхозниксем патне кĕнекесемпе хаçатсем илсе тухать, калаçусем ирттерет. Комсомол организаци секретарĕ М. Семенов, комсомолецсем Н. Петров, Л. Иванов, педучилищĕре вĕренекен А. Ильина юлташсем агитациллĕ-массăлла ĕçе анлăн туса пыраççĕ, ĕçре пысăк тĕслĕх кăтартаççĕ. Ильина комсомолка кунне виçĕ гектар ытла тырă вырнă. Ку колхозра пĕрлешÿллĕ столовăйпа ача ясли туни те колхозниксене ĕç кунĕпе туллин усă курма май пачĕ.

«Дружба» колхозра та кăçал уй-хир ĕçĕсем ăнăçлă пулса пыни колхозниксем хушшинче массăлла-политикăлла ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе нумай килчĕ. Бригадăсенчи агитаторсем боевой листоксем кăлараççĕ, калаçусем ирттереççĕ, малта пыракансен опычĕпе паллаштараççĕ. 3-мĕш бригадăри коммунист-агитатор Ф. Алексеев юлташ сăмахпа кăна мар, ĕçре те паха тĕслĕх кăтартать. Вăл ялан тырă вырнă çĕрте кулленех нормăна ирттерсе тултарса пычĕ. Çавăн пекех 1-мĕш бригадăн бригадирĕ коммунист-агитатор Н. Гурьев, 2-мĕш бригадăн бригадирĕ — агитатор И. Стеклов юлташсем агитаци ĕçне лайăх туса пычĕç, хăйсен бригадисене малти ретре кăларма пултарчĕç. Колхозри стена хаçачĕн редакторĕ А. Сергеев юлташ тăрăшнипе «Ялав» стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать. Кунтах уй-хир ĕçне тунă вăхăтра пилĕк хутчен «Молния» хаçат кăларнă. Агитациллĕ ĕçе учительсем те активлăн хутшăнаççĕ. Т. Харитонов, Т. Наумова, М. Скворцова учительсем тăтăшах уйра пулса калаçусем ирттереççĕ, колхозниксене çĕнĕ хыпарсемпе паллаштараççĕ.

«Заря» колхозри парторганизаци çумĕнчи агитколлектив (руководителĕ П. Ильин юлташ) 17 çынна пĕрлештерсе тăрать. Агитаторсем хăйсем умĕнче тăракан задачăсене тĕрĕс ăнланнă, колхозниксене сăмахпа çеç мар, ĕçре пример кăтартнипе хавхалантарса пыраççĕ. Уйрăмах И. Козлов, П. Ипполитов, П. Константинов, Н. Евграфов коммунист-агитаторсем тăрăшса ĕçленине палăртмалла. Боевой листоксен редакторĕсем Н. Семенов тата Р. Кузнецов комсомолецсем кашнинех 6—8-шар номер боевой листок кăларчĕç.

Массăлла-политикăлла ĕçе тĕрĕс йĕркеленипе «Заря» колхозра кăçал уй-хир ĕçĕсем иртсенхинчен лайăхрах пулса пычĕç. Тырă вырнă çĕрте мĕнпур колхозниксем активлăн хутшăнчĕç, ĕç нормине ирттерсе тултарса пычĕç, çакă ĕç ăнăçлăхне татса пачĕ. Р. Митрофанова, А. Тимофеева, В. Дмитриева тата ытти вуншар колхозницăсем çурлапа куллен 0,20—0,25-шер гектар тырă вырчĕç.

Тырпула пухса кĕртес ĕçре МТС механизаторĕсенчен чылайăшĕ пысăк активлăх кăтартаççĕ. Малтанхи 3—4 кун хушшинче Л. Феофанов комбайнер лафетлă жаткăпа 72 гектар, Н. Егоров—64, В. Емельянов—62, М. Семенов—56 гектар ыраш вырчĕç. Хальхи вăхăтра комбайнерсем хушшинче пыракан ăмăртура А. Сергеев комбайнер малта пырать. Вăл Куйбышев ячĕпе, Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсенче «С-4» комбайнпа 238 гектар тырă вырчĕ. Киров ячĕпе тăракан, «Большевик» колхозсенче ĕçлекен В. Емельянов комбайнер та сезон нормине ирттерсе тултарчĕ. Е. Тимофеевпа П. Стеклов комбайнерсем те тухăçлăн ĕçлеççĕ. 11-мĕш трактор бригадинчи Г. Матвеев машиновед «МК-1100» молотилкăпа авăн çапать. Ку таранччен вăл 280 тонна тырă çапса тĕшĕлерĕ. В. Александров, К. Тарасов, П. Спиридонов машиноведсем 180—215-шер тонна тырă çапрĕç.

МТС-ри партбюропа дирекци малта пыракан механизаторсене пама куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав тата вымпелсем тунă. Ĕç результачĕсене стена хаçачĕсемпе боевой листоксем тата кăтарту хăми çине çырса çутатса тăраççĕ.

Пур колхозсем те малта пыракансем пек тăрăшнă пулсан, район тырă вырса пухас тата тырпул хатĕрлес ĕçсене чылай маларах вĕçленĕ пулĕччĕ. Пытармалли çук, парти райкомĕпе райсовет исполкомĕн тата МТС ĕçĕнче те çитменлĕхсем сахал мар. Халĕ те пирĕн юлса пыракан колхозсем пур-ха. «Вперед», «Слава», «Красный Октябрь» колхозсенче тырă вырас, «Вперед», Жданов ячĕпе тăракан, «Герой», «Гвардеец» колхозсенче государствăна тырă парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. МТС та техникăпа кирлĕ пек усă кураймасть. Хăшпĕр комбайнсемпе молотилкăсен тухăçлăхĕ пĕчĕк. Сăмахран, 2-мĕш бригадăри Т. Андреев комбайнер мĕн пурĕ те 71 гектар çеç тырă вырнă.

Калас пулать, парти райкомĕ уй-хир ĕçĕнчи çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшрĕ. Уйрăм колхозсенче тата МТС-ра партиллĕ-политикăлла ĕçе мĕнле йĕркелени çинчен, уй-хир ĕçĕсем тата государствăна тырă парасси мĕнле пулса пыни çинчен, техникăпа мĕнле усă курни çинчен райком бюровĕн ларăвĕсенче сÿтсе явнă, йышăннă решенисене пурнăçлас майпа практикăлла ĕçсем тунă. Районти ертсе пыракан работниксем халĕ колхозсенче ытларах пулса конкретлă пулăшу пама тăрăшаççĕ. Çапах та эпир колхозсемпе пуçламăш парторганизацисене ертсе пырас ĕçри çитменлĕхсене пĕтĕмпех пĕтермен-ха. Тепĕр чухне организаторла пултарулăх çитмест, çавна пула хăшпĕр çĕрте партиллĕ-политикăлла ĕç кирлĕ пек пулса пымасть. Çак çитменлĕхсене пĕтересси, организаторла тата политикăлла ĕçе вăйлатса пырасси—пирĕн çивĕç.

Районти ялхуçалăх ĕçченĕсем кăçал, Канаш районĕнчи колхозниксемпе ăмăртăва тухса, хăйсем çине пысăк обязательствăсем йышăнчĕç. Çав обязательствăсене пурнăçласси уй-хир ĕçĕсене кăтартуллă вĕçленинчен нумай килет. Халĕ кĕлте кÿрсе авăн çапас, кукуруза çулса силос хывас, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл касарма хатĕрленес ĕçсене хăвăртлатни кирлĕ. Пирĕн задача ĕççыннисен патриотла çĕкленĕвне вăйлатса пырса, йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçламалла тăвасси пулать.

М. ИВАНОВ.

КПСС Шăхасан райкомĕн секретарĕ.

Куславккари çуртсем тăвакан заводри нумай рабочисем Шахтерсен кунне ĕçри пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илеççĕ.

Ÿкерчĕк çинче: социализмла ăмăртура малта пыракан рабочисем. Пĕрремĕш ретре (сылтăмран сулахаялла): З. Максимова, Л. Шулаева, А. Лонина, А. Комар, М. Кузьмина, иккĕмĕш ретре: А. Павлов, Н. Малинин мастер, Н. Петряев, М. Гурьев, З. Гинатулина юлташсем.

И. Кваков фотоÿкерчĕкĕ.

Шахтерсен кунĕ ячĕпе

КУСЛАВККА. Çуртсем тăвакан заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем, уяв умĕнхи вахтăна тăрса, социализмла ăмăртура паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Уйрăмах хăма çуракан цехра тата йывăç биржинче ĕçри çĕкленÿ пысăк.

Н. Васильев рамщик июль уйăхĕнчи заданине 124 процент пурнăçларĕ. Вăл Шахтерсен кунĕ ячĕпе ĕç вахтине тăнă, çак уйăхра сменăри нормăна куллен ирттерсе тултарать. П. Ларионов, Н. Желтухин, В. Александров рамщиксем те тухăçлă ĕçлеççĕ. З. Максимова, А. Лонина, М. Кузьмина станочницăсем, А. Павлов столяр т. ыт. те куллен паха тĕслĕх кăтартаççĕ.

Вагонсем çителĕклĕ уйăрса паман пирки экспедицире транспорт уйрăмĕ малтанхи вăхăтра çителĕклĕ ĕçлеймерĕ, хатĕр продукцие вăхăтра тиесе яраймарĕ. Халĕ çак уйрăмри бригадăсем пурте ăнăçлăрах ĕçлеме пуçларĕç, хатĕр продукцие вагонсем çине тиемелли талăкри заданисене тăтăшах ирттерсе тултараççĕ.

Л. Николаев юлташ ертсе пыракан грузчиксен бригади кунсерен виçĕ-тăватă кунхи нормăна пурнăçласа пырать. Августăн 16-мĕшĕнче вăл сменăри заданине 480 процент тултарчĕ. Борисов, Ильин, Осипов юлташсем ертсе пыракан грузчиксен бригадисем те тăрăшсе ĕçлерĕç. Çапла вара вĕсем 78 вагона графикра палăртнинчен икĕ сехет маларах тиесе çитерчĕç.

Кăçалхи çур çул хушшинче производствăра паха тĕслĕх кăтартнăшăн ССР Союзĕн Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительствин министрĕ Л. Г. Мельников юлташ Куславккари хăма çуракан заводри ултă çынна—Н. Желтухин рамщика, П. Иванова А. Курганов грузчиксене, йывăç биржин рабочине С. Морсков юлташа, столярнăй цехри станочницăна З. Максимова юлташа, хăма çуракан цехри аслă мастера А. Феофанов юлташа «СССР Çĕр кăмрăк промышленность предприятийĕсен строительство министерствин социализмла ăмăртăвĕн отличникĕ» значокĕпе наградăламалла тунă. Çавăнпа пĕрлех ултă çынна çак министерствăн Хисеп грамоти парса наградăланă.

К. НАМАНГАН.

Комсомол путевкипе—Донбасса

КУСЛАВККА. (Хамăр корр.). Пирĕн çĕршывăн хăвăртлă аталанса пыракан промышленноçĕнче çамрăк рабочисен йышĕ хутшăнсах пырать, апла пулин те халăх хуçалăхне рабочисем татах кирлĕ. Çавна май партипе правительство промышленноçра ĕçлеме кайма комсомолецсемпе çамрăксене чĕнчĕç. Çак чĕнĕве районти çамрăксем хапăл туса йышăнчĕç. Чылай комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем ВЛКСМ райкомне пыраççĕ, шахтăсем тума Донбасса яма ыйтса заявленисем параççĕ. Акă, Пученкка ялĕнчи Алексей Петряев комсомолец Донбасса яма ыйтать, Ленинла комсомол шанăçне тÿрре кăларассишĕн тăрăшса ĕçлеме сăмах парать.

Хăшпĕр çамрăксем çемйипех Донбасса, шахтăсен строительствине кайма кăмăл тăваççĕ. Çуртсем тăвакан заводри Алексей Степанович Николаев кочегар хăйĕн заявленийĕнче çапла çырать: «Эпĕ электрик тата землесос машинисчĕн специальноçĕсене вĕренсе çитнĕ. Çак ăсталăха пĕлекен çынсем Донбасра кирлĕ пулсан, мана унта ĕçлеме яма ыйтатăп», тенĕ. Унпа пĕрлех унăн арăмĕ Людмила Николаева та (вăл та çак заводра ĕçлет) хăйне Донбасса яма ыйтса ВЛКСМ райкомне заявлени панă.

* * *

Августăн 24-мĕшĕнче пирĕн республикăри комсомолецсемпе çамрăксен малтанхи ушкăнне Донбасса ăсатрĕç. Çĕр кăмрăк промышленноçĕнче ĕçлеме Шупашкар хулинчен кăна 50 çын ытла тухса кайрĕ. Комсомол путевкисем илнисем хушшинче — пир-авăр комбиначĕнче ĕçленĕ Р. Дмитриева, пассажирсен автомобиль хуçалăхĕнче слесарь пулнă Г. Чечнев, радиомонтер Л. Лукин тата ыттисем те.

Çитес кунсенче Донбасса ĕçлеме кайма татах чылай çамрăксене путевкăсем параççĕ.

1957 çулта тухмалли кĕнекесем

Чăваш государство издательстви 1957 çулта кĕнеке кăлармалли плана çирĕплетнĕ. Кăçалхипе танлаштарса пăхсан, çитес çулхи план чылай пысăк. Кĕнекесен шучĕ нумаях ÿсмест пулин те, çĕнĕрен çырнă кĕнекесен шучĕ тата тиражсем ÿснĕ май, издательство ĕçĕ 35—40 процента ялăн ытларах пулать.

Килес çулхи планра çĕнни мĕн пур-ха?

Малашне чăвашла В. И. Ленин произведенийĕсен библиотеки тухса пымалла. 1957 çулта çавăн пек кĕнекесем кăларма палăртса хунă: сборниксем — Октябрьти революци çинчен, Культура çинчен, Çамрăксем çинчен, Аслă пуçару, Ăмăртăва епле организацилемелле. Тата уйрăм кĕнеке туса «Мĕн вăл «халăх тусĕсем», вĕсем социал-демократсене хирĕç мĕнле çапăçаççĕ» ятлă произведение пичетлесе кăлармалла.

План йĕркеллĕн пурнăçланса пырсан, çитес 4—5 çул хушшинче В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашла вуласа вĕренес текенсемшĕн чăн та аван библиотекăх пулать.

К. Маркспа Ф. Энгельс произведенийĕсене те çавăн пекех библиотекăсем туса кăларса пыма шутласа хунă. Çак ĕçе туса пыма, КПСС обкомĕ йышăннă тăрăх, Чăваш чĕлхе, литература, истори тата экономика наукăпа тĕпчев институчĕ çумĕнче уйрăм редакци секторĕ пулмалла. Çав секторăн терминологи словарĕ кăларас ĕçе те тумалла пулать.

Октябрьти Социализмла Аслă революци 40 çул тултарнă тĕле Наукăпа тĕпчев институчĕ чылай çĕнĕ кĕнекесем хатĕрлет. Вĕсен шутĕнче — «Чăваш çĕршывĕнче Совет влаçĕ пуçланса кайни» ятлă сборник; Октябрьти революцире хастарлă кĕрешнĕ çынсем аса илнисем (сборник), И. Г. Кадыков çинчен П. Г. Григорьев çырнă очерк; архиври документсен сборникĕ, паттăр коммунист М. Г. Булочников çырнă записакĕсем, В. Д. Кузьмин çырнă «Чăваш çĕршывĕнче Совет влаçĕшĕн кĕрешни» ятлă брошюра; В. Н. Любимов çырнă «Чăваш республики 40 çул хушшинче» ятлă брошюра; коллектив çырнă «Чăваш ялĕ 40 çул хушшинче» ятлă брошюра тата ыттисем те.

Партин XX съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа пыни çинчен каласа паракан брошюрăсем 1957 çулта 4—5 тухмалла. Чăваш çĕршывĕнче ултăмĕш пилĕкçуллăхра тăвакан ĕçсемпе паллаштаракан кĕнеке кăлармалла.

Ялхуçалăх литературин тематики те чылай сарăлмалла. Пахча çимĕç тăвасси çинчен тата вĕлле хурчĕсем ӳрчетесси çинчен учебниксем пулаççĕ. Колхозсемпе МТС-сен ĕçĕсенчи лайăх опыта сарас тĕлĕшпе 50 ытла кĕнеке, брошюрăсем, листовкăсем кăларма палăртнă. Вĕсем хушшинче: колхоз экономикине хăвартас ыйтусем çинчен, тăваксене чакарса кашни гектартан тупăш ытларах илмелли майсем çинчен çырнă брошюрăсем пулмалла.

Пирĕн республикăри колхозсенче те малашне сахăр кăшманĕ акасси сарăлса пырĕ. Ку ĕç çинчен те брошюра тухать.

Ялхуçалăх кĕнекисене кăларас ĕçе колхозсенче, МТС-ра ĕçлекенсене ытларах хутшăнтарас пулать. Издательство çак ĕçре районсенчи парти организацийĕсенчен пулăшу кĕтет. Лайăхрах ĕçлекен хăш колхоз, МТС, ферма, бригада, колхозник, тракторист, комбайнер, ферма работникĕ çинчен çырсан аванрах пуласси, чаплă ĕçлекенсем хăйсем те кĕнеке çырма пултарнине районсенчи парти организацийĕсем палăртма тата ку ĕçе организацилеме пултараççĕ.

Çитес çулта промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсене кирлĕ кĕнекесем чылай пичетленсе тухмалла. Пуринчен ытла вĕсем новаторсен ĕçри çитĕнĕвĕсене сарасси çинчен пулаççĕ. Ку ыйтупа 1957 çулта пурĕ 14 кĕнеке кăларма палăртнă. Вĕсем хушшинче — пир-авăр комбиначĕнчи, электроаппаратура заводĕнчи, вăрман промышленноçĕнчи, строительствăри малта пыракансем çырнă кĕнекесем.

1957 çулхи планра илемлĕ литература кăларас ĕç, уйрăммăн илсен, ача-пăча валли кĕнеке кăларасси, чылай ÿсмелле. Кĕскен каласан, лайăх та паха çыракан писательсен произведенийĕсене пичетлесе кăларма чару çук. Кашни писатель тенĕ пек 1957 çулта мĕн те пулин çĕнĕрен çырнине пичетлесе кăлармалла. Çакна та калас пулать: хăшпĕр писательсем халĕ çĕнĕрен произведенисем çырас енĕпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ, час-часах киввисене тепĕр хут кăларнипех лăпланма пăхаççĕ.

Пысăк произведенисемсĕр пуçне, халăх валли пĕчĕкрех, анчах çивĕч очерксем, витĕмлĕ произведенисем кирлĕ. Лайăх çырнă очерк пулсан, кирек хăçан та плана тăрласах, пĕр чăрмавсăрах пĕчĕк кĕнеке кăларса яма пулать.

Çитес çулта шкулсем валли 39 учебник кăлармалла. Вĕсем хушшинче—10 учебник пирвайхи хут тухмалли çĕнĕ учебниксем, 8 учебник—юсаса кăлармаллисем. Издательство малашне учебниксене вăхăтра кăларса пама шутлать.

Наука литературине çакнашкал кĕнекесем хушăнмалла: В. Г. Егоровăн «Кучухнехи чăваш литературин чĕлхи», 2-мĕш пайĕ; И. А. Андреевăн—«Чăваш чĕлхин стилистики çинчен»; И. П. Павловăн—«Этнограф Н. И. Золотницкий» ятлă брошюра; Г. Н. Волковăн—«Чăваш халăх педагогики»; М. И. Макаровăн — «И. Н. Ульянов тата чăвашсене çутта кăларас ĕç»; М. А. Андреевăн—«ЧАССР ялхуçалăхĕн социализмла экономики»; коллектив çырнă сборник «Чăваш халăхĕ камран чăмăртанни çинчен»; В. Д. Дмитриевăн «Чăвашсен XVIII ĕмĕрхи историйĕ çинчен»; В. Д. Кузьминăн «Чăваш хресченĕсен Октябрь революци умĕнхи кĕрешĕвĕ çинчен» т. ыт. те.

1957 çултан пуçласа «Ялав» журнал çумĕнче библиотека тухса тăмалла (кашни уйăхра пĕр кĕнеке). Çав библиотекăра халăха килĕшекен произведенисем пулаççĕ.

Çапла ĕнтĕ, халăх валли тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем çултан-çул ытларах тухса пымалла. Партин XX съезчĕ йышăннисене пурнăçа кĕртес ĕçре паха кĕнеке пысăк пулăшу пама пултарать.

Кĕнекесене халăх масси уççăн ăнланмалла чĕлхепе, çав вăхăтрах ытлашши тăсмасăр, кĕскен çырма тăрăшас пулать. Кĕскен çырма май пур çĕртех епле пулин те хулăнтарах кĕнеке çырма пăрахас пулать. Мĕншĕн тесен, ытлашши тăсса кайса çырни кĕнеке хакне ÿстерсе ярать. Ун пек кĕнекесем вулакансемшĕн мар, çыракансемшĕн кăна хаклă. Анчах пирĕн хамăр ĕçре халăх каланине асра тытмалла: пĕчĕк çĕççĕ ылтăн пысăк пăхартан нумай ирттерет!

Сăмах май, кĕнекесене халăх хушшине çитересси çинчен те каласа хăварас килет. Ку таранччен Чăвашкниготорг (унăн директорĕ Суворов юлташ) ялан кĕнекесене сахалтарах тиражпа кăларасшăн тăрăшать. Ку вăл Книготорг кĕнеке сутас ĕçе хастарлăн пикенесшĕн маррине кăна пĕлтерет, урăх нимĕ те мар. Хальхи вăхăтра ялсенчи магазинсенче çĕнĕ кĕнекесем çукпа пĕрех. Мĕншĕн? Тухнă кĕнекесем библиоколлектор урлă кăна саланса пыраççĕ. Ваккăн сутни çукпа пĕрех. Кунашкал ĕçлени малашне никама та çырлахтараймĕ. Халăх хушшине кĕнекесем сарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлес пулать.

И. КУЗНЕЦОВ.

Чăваш государство издательствин директорĕ.

„Ялав" журналăн çĕнĕ номерĕ

Чăваш писателĕсен Союзĕ кăларакан «Ялав» журналăн саккăрмĕш номерĕ пичетленсе тухрĕ. Ку номер «Халăх ырлăхĕшĕн» ятлă умстатьяпа уçăлать.

Стихван Шавлын «Шав малалла, шав тăвалла», Хветĕр Уярăн—«Хир ачисем» ятлă очеркĕсем паянхи колхоз пурнăçне çутатса параççĕ. «Хусан хули» очеркра В. Моисеев Тутар республикин столици ÿссе, аталанса пыни çинчен çырать.

Журналта А. Талвирăн «Никĕс» ятлă повеçĕн юлашки сыпăкĕсем, И. Григорьевăн «Тусемпе пĕрле» ятлă повеçĕн пуçламăшĕ, А. Ялгаш çырнă «Ашшĕ çулĕпе», В. Андреева çырнă «Аякри йăмăк» калавĕсем пичетленнĕ. Иван Франко çуралнăранпа çĕр çул тултарнине палăрт тунă май, А. Ĕсхель, А. Алга поэтсем аслă писателĕн чăвашла куçарнă сăвăсене кĕртнĕ.

Журналта Н. Евстафьевăн «Çĕнĕ юрăсем», Е. Афанасьев, А. Воробьев, Н. Сандров, А. Лукин, Б. Тихонов, В. Иванов çамрăк поэтсем çырнă сăвăсем, Ф. Лукинăн «Çĕршывăм, санăн!» юрри (сăмахĕсем Н. Сандровăн) пичетленнĕ. Çавăн пекех кунта истори наукисен кандидачĕ П. Григорьев çырнă «Тайăр Тимкки çинчен калакан çĕнĕ материалсем» тата С. Юшков çырнă «Пĕр пайлă пьесăсем çинчен» ятлă статьясем пур.

Ялти массăлла-политикăлла ĕç

Редакцие килнĕ çырусем тăрăх

Республикăри партипе совет, ялхуçалăх органĕсем, колхозсемпе МТС-сем умĕнче ответлă задача тăрать: пĕтĕм тырпула çак кунсенче вырса пĕтермелле, чи пирвайхи тивĕçе—государствăна тырă памалли плана август уйăхĕнче тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле. Авăн çапассине хăвăртлатасси, выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлесси, кĕрхине вĕçлесси—паян тумалли ĕçсем.

Çак пысăк та ответлă задачăсене чыслăн пурнăçлас тесен, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен тата механизаторсен ĕçри активлăхне пултарулăхне ÿстерме пулăшакан паха майсемпе туллин усă курмалла.

Умра тăракан хуçалăхла-политикăлла задачăсене пурнăçлама ĕççыннисене мобилизацилемелли пысăк вăйсенчен пĕри вăл—политикăлла агитаци. Массăлла-политикăлла ĕçе тăтăшах тата конкретлă туса пыни çĕрте хуçалăх строительствинче ăнăçлăх ÿсĕмĕсем ÿссе пырать.

Элĕк районĕнчи «Правда» колхозри пуçламăш парторганизацире, сăмахран, тырпул пухса кĕртес умĕн партиллĕ-политикăлла ĕç планне тĕплĕн тунă, коммунистсене чи ответлă вырăнсене вырнаçтарса тухнă. Коммунистсен ытларахăшĕ тырă вырас, авăн çапас, государствăна тырă леçес ĕçсене тÿрремĕн хутшăннă. Политика тĕлĕшĕнчен çирĕп пĕлÿллĕ коммунистсемпе комсомолецсем массăлла-политикăлла ĕçе умра тăракан задачăсемпе тачă çыхăнтарса туса пыраççĕ, стена хаçачĕ, боевой листоксем кăларас, кăтарту хăмисем йĕркелес ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Коммунистсем, агитаторсем социализмла ăмăртăвăн организаторĕсем пулса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ «Правда» колхоз йĕрки тата [illegible] тырăсене пиçсе çитнĕ вăхăтрах, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ, государствăна тырă срокчен, августăн 10-мĕшĕ тĕлне парса татнă. Халĕ [illegible] государствăна тырă параççĕ, авăн çапаççĕ, [illegible] хатĕрленеççĕ.

Çав хĕрÿллĕ тапхăрта массăсемпе ĕçлесси, вĕсене коммунизмла воспитани парасси—агитколлективсен чи пархатарлă ĕçĕ. Анчах ялсенчен килнĕ хыпарсем çакăн çинчен калаççĕ: чылай колхозсенче массăлла-политикăлла ĕçе вăйсăрлатнă, [illegible] умĕнче тăракан конкретлă задачăсемпе çыхăнтармасăр туса пыраççĕ.

Çак çитменлĕх Сĕрпÿ районĕнчи нумай колхозсенче палăрать. Ку районти «Большевик» колхозра агитациллĕ-массăлла ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Чылай агитаторсем уй-хир ĕçченĕсем патĕнче пулмаççĕ. Вĕсем стена хаçачĕ, боевой листоксем кăларас ĕçе хутшăнмаççĕ. Бригадăсем хушшинчи ăмăртăва çутатса тăма кăтарту хăми туман. Парторганизаци секретарĕ, ялах агитколлективĕн руководителĕ И. Андреев юлташ çак çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнать, массăлла-политикăлла ĕçе лайăхлатма тăрăшмасть.

Колхозри ĕçсем япăх пыраççĕ. Государствăна тырă памалли плана çурри çеç тултарнă. Ответлă участоксенчи хăшпĕр çынсем ĕç дисциплинине пăсаççĕ, артель пурлăхне упрама тăрăшмаççĕ. Колхоз кладовщикĕ Л. Яковлев пĕр вăхăтра правленирен ыйтмасăрах хăй валли вутă хатĕрлеме вăрмана тухса кайнă. Вара унăн айăпĕпе кĕлетре 50 тонна тырă хĕрме пуçланă, темиçе кун хушши тырă итем çинчех выртнă. Колхозри коммунистсем, агитаторсем, парти райкомĕн ку зонăри инструкторĕ Иванов юлташ çак çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшнă пулсан, паллах, колхоз çавăн пек юлса пыман пулĕччĕ.

КПСС Сĕрпÿ райкомĕ ялти массăлла-политикăлла ĕçе тивĕçлипе ертсе пымасть. Унăн работникĕсем пуçламăш парторганизацисене ку енĕпе çителĕксĕр пулăшаççĕ, политикăлла агитацие хăйсем те начар хутшăнаççĕ.

Парти работникĕ массăлла ĕçе туса пыма ялти агитаторсене çеç хушать пулсан, çав вăхăтрах хăй ку ĕçрен аякра тăрать пулсан, вăл хăйĕн тивĕçлĕ обязанноçне пурнăçламасть. Унăн тивĕçĕ—колхозниксем хушшинче политика, хуçалăх, культурăпа ытти ыйтăвĕсем тăрăх час-часах доклад, лекци, калаçу ирттерсе, массăсене хĕрÿллĕ ĕçе мобилизацилесси.

Политикăлла агитаци тăвасси—пысăк искусство. Агитатор политика тĕлĕшĕнчен çирĕп пĕлÿллĕ пулмалла, партипе правительство политикине тĕрĕс ăнлантарса пама, ĕçри ÿсĕмсем тума хавхалантарма пĕлмелле. Массăлла-политикăлла ĕçри чи кирли, чи хакли—унăн идейăлла содержанийĕ. Умри задачăсемпе, вырăнти тĕслĕхсемпе çыхăнтарса тунă агитаци кăна пысăк усă пама пултарать. «Эпĕ колхоз участокĕнчи мĕнпур ĕçсемпе лайăх тĕплĕн паллашмасăр колхозниксем умне тухмастăп. Мĕншĕн тесен ĕçсем мĕнле пулса пыни çинчен ыйтусем пуласса пĕлетĕп», тет Первомайски районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозри чи лайăх агитатор Н. Базунова юлташ.

КПСС райкомĕсемпе пуçламăш парторганизацисен Базунова юлташ пек хĕрÿллĕ, партин хисеплĕ поручение тÿрĕ кăмăлпа, ĕçерен пурнăçласа пыракан агитаторсен ÿстерсе çитĕнтерессишĕн, вĕсен пĕлĕвне ăсталăхне ÿстерессишĕн куллен тăрăшас пулать.

Ялти агитатор—ялхуçалăхĕнчи малта пыракансен опытне, новаторсен çитĕнĕвне пурнăçа кĕртекен çын. Апла пулсан, агитаторăн чи малтан хăйĕн çав опыта вĕренсе пĕлме тăрăшмалла.

Агитациллĕ-массăлла ĕçĕн ытти тĕрлĕ формисемпе те анлăн усă курни кирлĕ. Ишлей районĕнчи «Сталинская гвардия» колхозри парторганизаци, сăмахран, пичет пропагандине пысăк вырăна хурать. «Усĕм» стена хаçачĕ, боевой листоксем, «Крокодил Ишек ялĕнче» сатирăлла хаçат ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç, пурлăха упрама тăрăшман çынсене, кахалсене хирĕç сивĕч кĕрешеççĕ.

Вырăнти пичетпе пур çĕрте те çавăн пек усă курма майсем çителĕклĕ. Анчах хăшпĕр çĕрте ăна тивĕçлипе хакламаççĕ.

«Пирĕн колхозра «Сĕнтерĕ» стена хаçачĕ, бригадăсенче боевой листоксем сайра-хутра кăна кăлараççĕ. 1-мĕш бригадăра вара пĕр боевой листок та тухман. Листок макечĕсем колхоз бригадирĕн Владимировăн килĕнче выртаççĕ»,—тăрăхса çырать Г. Тарасов корреспондент Ишлей районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхозран.

«Хăш уй-хир бригади малта е юлса пырать,—пĕлме çук. Пирĕн колхозра Хисеп хăми те, кăтарту хăми те çук»,—тесе çырать Элĕк районĕнчи Вырăс Сурăм салинчен С. Иванов юлташ.

Парти организацийĕсен наглядлă агитацие йĕркелесе ĕçри пысăк çитменлĕхсене пĕтерес пулать. Вăл вопросăн та витĕмлĕ пултăр, ĕçе лайăхлатма пулăштăр.

1856

УКРАИНА АСЛĂ ПИСАТЕЛĔ ИВАН ФРАНКО

1956

МУХТАВЛĂ ПИСАТЕЛЬ

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ йышăннипе çак кунсенче пур çĕршывсенче те Украина аслă писателĕ Иван Франко çуралнăранпа 100 çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Совет Союзĕнчи тусла халăхсем Иван Франко юбилейне уйрăмах пысăк хавхаланупа ирттереççĕ. Мускавра, Минскра, Тбилисире, Ташкентра, Алма-Атара, Бакура, Ереванра, Хусанта тата ытти пысăк хуласенче тухса тăракан хаçатсемпе журналсем те аслă писатель пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен нумай çыраççĕ. Августăн 28-мĕшĕнче Киевра Правительствăн Иван Франко юбилейне ирттерес тĕлĕшпе организациленĕ Комитечĕн чаплă ларăвĕ пулса иртет. Çак кунах Украина писателĕсен Союзĕн пленумĕ пуçтарăнать, Львов хулинче Украина ССР Наукăсен академийĕн сессийĕ уçăлать. Иван Франко ятне хисеплесе Совет Союзĕнчи пур республикăсенчен, çавăн пекех ют çĕршывсенчен те çак кунсенче Киева делегацисем пухăнаççĕ. Унта чăваш писателĕсен представителĕ те пулать.

Иван Яковлевич Франко 1856 çулхи августăн 27-мĕшĕнче Галицире — Хĕвеланăç Украинăри Дрогобыч уездĕнче Нагуевичи салинче çуралнă. Унăн ашшĕ тимĕрçĕ пулнă. Франко пĕчĕклех чухăн хресченсен тата нефть кăларнă çĕрте ĕçлекен рабочисен йывăр пурнăçне курнă, вĕсен ахлатмасăр тухмай сăмахĕсем унăн чĕрине пырса тивнĕ. Ахаль мар ĕнтĕ вăл чухăнсемпе рабочисен нушине нихçан та манмасть, хăйĕн сăввисемпе калавĕсенче, повеçĕсемпе пьесисенче пурнăçĕн ытла йывăр ĕçре хăпаланса пĕтнĕ алăллă çынсем çинчен çырать.

Иван Франко ачаллах ĕçе юратнă, тар юхтарса ĕçлекенсен таса кăмăлне, вĕсен ĕмĕтне, шанăçне, пултарулăхне пĕлсе тăнă, ун çинчен çырнă, хăйĕн учителĕ Тарас Шевченко пекех, ĕçхалăхне пусмăрласа пурăнакансене хирĕç кĕрешĕве, çутталла, ирĕклĕхшĕн çапăçма чĕннĕ. Унăн литература ĕçĕнчи чи малтанхи çăлкуçĕ — Тарас Шевченко пулсан, малалла Франко вырăс литературипе паллашать, XIX ĕмĕрти вырăссен аслă писателĕсен произведенийĕсене юратса вулать.

1875 çулта Франко Дрогобыч хулинчи гимнази пĕтерсе Львова каять, унти университета вĕренме кĕрет. Студент чухнехи тапхăр çамрăк писательшĕн калама çук пархатарлă кунсем пулса тăраççĕ. Кунта вăл пикенсех Белинский, Чернышевский, Добролюбов сочиненийĕсене вулать. Çак вăхăтрах вăл Чернышевскин «Мĕн тумалла?» романне украинла куçарса «Друг» ятлă журналта пичетлет, Карл Марксăн «Капиталĕпе» паллашать.

Львов хулинчех Франко украинецсен ун чухнех паллă пулнă литераторĕн тата обществăлла деятелĕн Драгомановăн уçă çырăвĕсемпе лайăх паллашать. Çак çырусенче автор çамрăксене вырăссен тата Хĕвеланăç Европăри халăхсен прогрессивлă литературисенчен вĕренме тата тăван чĕлхепе çырма чĕннĕ.

Хĕвеланăç Украина ун чухне Австрие пăхăнса тăнă. Çавна пула Франко пирки часах Венăра пĕлеççĕ; унтан хушнă тăрăх, ăна, социалист тесе, суда параççĕ. Çивĕч чĕлхеллĕ, хăвар чĕреллĕ çамрăк поэта тĕрмене хупса лартаççĕ. Çак малтанхи суд хыççăн писатела мĕн виличчен полици асăрласа, сăнаса тăнă, пĕрре кăна мар тĕрмене лартнă.

Анчах Иван Франко парăнмасть, тĕрмепе хăратсан та, националистсем тем пек элеклесен те, вăл ĕçхалăхĕшĕн тăрать, ăна сутмасть.

Тĕрмерен тухсан Франко Карл Марксăн «Капиталне» вĕренет, Галици (ĕлĕк Хĕвеланăç Украинăна çапла каланă) экономикине, рабочисен пурнăçне тĕпчет. Çак тапхăрта ĕнтĕ вăл чуллăн капиталистсем рабочисен юнне сăхса пуйни çинчен ĕмĕрлĕхе юлнă повеçĕсемпе калавĕсене çырать.

1879 çулхине Франко поляк рабочисен «Праця» хаçат редакцийĕнче ĕçлет, «Капиталăн» пĕрремĕш томĕнчи 24-мĕш сыпăка украинла куçарать, Энгельсăн хăшпĕр статьисене украинла та, полякла та куçарать. 1881 çулта Франко «Галици рабочийĕсем мĕн тăвасшăн» ятлă пĕчĕк кĕнеке кăларать.

Иван Франко 1916 çулхи майăн 28-мĕшĕнче Львовра вилнĕ.

Вăл мĕн пурĕ пилĕк пин произведени çырса хăварнă. Ку шутра — сăвăсемпе поэмăсем, очерксемпе калавсем, повеçсемпе драмăсем, экономика, истори, этнографи ыйтăвĕсемпе çырнă наукăлла статьясем. Хăватлă поэт, прозаик, драматург, вăл çав вăхăтрах нумай пĕлекен ученăй-энциклопедист та пулнă.

Украинла, полякла çырнисĕр пуçне вăл вырăс, нимĕç, акăлчан, француз, чех чĕлхисемпе çырнă произведенисене те украинла нумай куçарнă. Ĕлĕкхи самана Франко сочиненийĕсене пурне те пĕрле пухса йĕркеллĕ кăларса тăрайман. Унăн паха сăввисемпе калавĕсем, повеçĕсемпе драмисем, хаклă статьисем революци хыççăн тин пĕтĕм халăх патне çитрĕç. 1918 çултан пуçласа 1954 çула çитиччен Франко произведенийĕсене Совет Союзĕнчи 19 халăх чĕлхипе 507 хутчен — пурĕ 8.926 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. Кăçал унăн сочиненийĕсем Киевра 20 томпа украинла, 10 томпа Мускавра вырăсла тухаççĕ.

Иван Франко сăвăлла çырнă произведенисенчен «Моисей» ятлă поэма (ăна вăл 1905 çулхи революци юхăмĕ çĕкленсе пынишĕн савăнса çырнă) поэт халăха юратнине, революцилле хавхаланăва ырланине кăтартать. «Шанчă сулçĕсем» цикла кĕрекен сăвăсем çинчен каламасăр та иртме çук. Асталăх тĕлĕшĕнчен вĕсем тĕнчери поэзин чи паха произведенийĕсен шайĕнче тăраççĕ.

Франко — тăван халăхне юратнă, Пушкин, Горький, Шевченко, Коцюбинский пекех патриот пулнă, çапах национализм енне пĕр минутлăха та туртăнман; хăй вăхăтĕнче пурăннă шовинистсемпе нихçан та пĕр шухăшлă пулман, вĕсене юратман, курайман.

Хăйĕн пĕтĕм чĕри хăватне, пулли кăмăлне, тăп-пуçне ĕçчен халăха парнеленĕ вăл, халăх чун-хавалне мухтанă:

Ту айĕнчен тапса тухать çăлкуçĕ,
Çĕсенхирпе шăнкăртатса чупать;
Унта çут уйăх хăй сăнне курать,
Хĕвелшĕн те вăл вылямалли уçă.

Çĕр варĕнчен хăват илсе çак юхăм
Хăй чуппине нихçан та чарас çук,
Йĕри-тавра çурхи кун çиçнĕ чух
Чечексене вăл чун кĕртет пит хÿхĕм.

Çак çăл тапни вăл — халăх чун-хавалĕ;
Чи йывăр хурлăхра та тус тăванăн
Чĕрешĕн ăш сăмах тупса вăл калĕ.

Çĕр айĕнче таса вăй çăлкуçланнăн
Мĕн ĕмĕр-ĕмĕр çĕн сăмах çуралĕ,
Чĕресене вутлантарса кăварлăн.

(А. Эсхель куçарнă).

Сăвăсемпе поэмăсемсĕр пуçне, Франко проза тата драматурги жанрĕпе нумай çырнă. Пусмăр тÿссе пурăнакан чухăн хресченсемпе ремесленниксен, рабочисен сăнарĕсене эпир «Тарласа тертленекенсем» тата «Борислав калавĕсем» ятлă циклсенче, «Удав», «Борислав кулать» повеçсенче, çавăн пекех ача-пăча валли çырнă калавсенче куратпăр. Сăмахран, «Хăй айăплă» («Тарласа тертленекенсем» циклтан) калава илер-ха. Унта автор ĕмĕтсĕр усламçă парăма кĕнĕ чухăн хресчен Микола Прач сăнарне кăтартса парать. Калав пысăк мар, анчах вулакан умне Микола Прач чăн пурăнакан çын пекех чĕррĕн тухса тăрать. Ун пурлăхне туртса илекен Мортко Шиндер усламçă çăткăнланни паянхи кун та чун-чĕрене чĕтретет, пĕтĕм ăшчике çÿçентерсе илет. Çурт-йĕрсĕр, çĕрсĕр тăрса юлнă хресчен чĕри тискерленсе пыни çинчен каланă сăмахсем — Франко чăн-чăн чĕлхе ăсти пулнине пĕлтереççĕ.

Мортко Шиндер улталанă хыççăн çаралса юлнă Микола вăрман кастаракан улпут патне ĕçе кĕрет. Султалăкран вăл хĕрĕх гульден укçа пухса тăван ялне таврăнать, арăмĕпе тупсăхланă ачисемпе курнăçичченех усламçă патне пырать, усламçа хĕрĕх гульден парăмне тавăрса парса хăйĕн хуçалăхне каялла илме ĕмĕтленет. Мортко Шиндер ăна хирĕç асав шăлне кăтартса ахăлатса çеç ярать. Хăйĕн çурт-йĕрне каялла тавăрма май килменнишĕн çăрăхнă Микола çемйине те курнăçмасть, тепĕр хут ют çĕрти улпут патне пырать, йывăр та хăрушă ĕçе кĕрсе пуçне çиет.

Микола пек телейсĕр çынсене эпир Франкон ытти калавĕсемпе повеçĕсенче те, драмисенче те нумай куратпăр.

Франко иртнĕ саманари тÿсме çук йывăр пусмăрлăха сирсе ĕçхалăхне ирĕке кăларассишĕн тăрăшнă, çак çутă кун килессе шаннă, пархатарлă ĕмĕтпе пурăннă.

Мухтавлă писатель çырнă произведенисенчен чылайăшне чăваш халăхĕ те тăван чĕлхепе вулать. Иван Франко калавĕсенчен çаксене чăвашла пичетлесе кăларнă: «Пĕчĕк Мирун», «Гриць шкулта», «Капан хÿшши айĕнче», «Тимĕрçĕ лаççинче», «Çутă патне» (Н. Ильбек куçарнă), «Хăй айăплă» (В. Долгов куçарнă). Çавăн пекех А. Эсхель, А. Алга, Г. Ефимов, Н. Евстафьев поэтсем Украина писателĕн уйрăм сăввисене те чăвашла куçарнă.

Калас пулать, чăваш писателĕсем Иван Франко произведенийĕсене юлашки пилĕк-ултă çул хушшинче çеç куçарма тытăннă-ха. Малашне ку ĕç, паллах, ытларах сарăлса пырĕ.

Иван Франко кĕнекисем Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне çирĕплетме пулăшаççĕ. Украина халăхĕпе чăваш халăхĕн традицилле туслăхĕ те çулсерен тĕрекленет. Аслă писатель çуралнă 100 çул тултарнине хисеплесе паллă уяв ирттернĕ май, эпир Украина халăхне кĕрÿллĕ салам яратпăр!

Алексей ТАЛВИР.
Чăваш писателĕсен Союзĕн
Правленин председателĕ.

Иван Франко сăввисем

* * *

Кĕрлет! Ыр çанталăк килет сывхарса,
Чĕрĕлет çут тĕнче капăр тум тумланса,
Çĕр кĕтет чĕрĕ вăй кĕртекен сумăра,
Ун çийĕн çÿрет шухă çил, ахăрса,
Анăçран капланса хура пĕлĕт килет —
Кĕрлет!

Кĕрлет! Халăха хумхану хускатать!
Тен, курăнĕ чăн та хитре самана...
Кĕтетпĕр: хавас улшăну та кĕç пулĕ.
Çав пĕлĕтсем — пулас ĕмĕр кун-çулĕ,
Çав ĕмĕр, çур кунĕ пек, йăлт çĕнетет...
Кĕрлет!

1881

Г. ЕФИМОВ куçарнă.

ХАЛЬХИ ХАЛАП

Пур халăхăн халапĕ:
Шыв тулнă кунсенче
Шыва тепле-мĕн чăмнă
Пĕр çын пĕпер çинчен.
Çаврать пит вăйлă юхăм,
Çурхи шыв мăй таран.
Çын кăшкăрать хаяррăн:
«Хăтарăр авăртан!»
Çав самантра кÿрши-мĕн
Кĕпер çинче тăрать,
Вăраххăн шухăшлать-мĕн:
«Путать е хăтăлать?»
Лешĕ кăшкăрать: çăлсамăр!
Кун — пур пĕрех сăмах:
«Вăйна хĕрхенĕр, кумăм —
Анса ларсамăрах!»

Ах! Мĕнех эс калăн?
Çак пирĕн вăхăтра
Ун пек кÿрше сахал-и
Куратпăр пурнăçра?
Кунсем иртеççĕ санăн
Хурлăхпала, тертпе;
Асапланатăн, шывсăр
Хăварнă пулă пек;
Чунран тарать-и шанчăк,
Куç хуралса килет,
Тепри: «Тĕрĕс тумарăн»
Тесе шав ятлать.
Эс хуйхăратăн, унăн
Ялан пĕрех сăмах:
«Вăйна хĕрхенĕр, кумăм —
Анса ларсамăрах!»

Çаплах-çке пирĕн халăх
Телейшĕн çапăçать,
Вăл сăнчăрне татасшăн
Мĕн ĕмĕр талпăнать.
Таçтан пăхса тăраççĕ
Ăна суя тусем,
Нимпе те пулăшмасăр
Пулмасть-шим? — теç вĕсем.
Ун пек кÿрше пĕлетпĕр:
Вăл халăхшăн хыпмасть,

Пăхса тăрать ахаль çеç
Путать-и е путмасть?
Çын çăлăнăç ыйтсассăн,
Ун пур пĕрех сăмах:
«Вăйна хĕрхенĕр, кумăм —
Анса ларсамăрах!»

Анчах мĕн пулчĕ? Кур-ха!
Путасшăн мар. Чăнах!
Çыр хĕррине вăл тухрĕ,
Вилмерĕ, вăл сывах.
Вара хыт çĕр туйсассăн,
Ура çине тăрсан,
Сасартăк, кăшкăраççĕ:
«Ăçта эс! Пăлханан!?»
Кĕпер чĕтре пуçларĕ,
Çил урчĕ. Чăтнă пуль!
Пурте çухраç пĕр харăс
«Хăтарăр! Караул!
Хăрушлăхра патшалăх!
Ку — юлашки сехет!
Капла çĕр юлнĕ пирĕн!
Чиркÿ, престол пĕтет!

Енчен çапла пулас-тăк
Пĕрре çак тертшĕнех
Пурри сума тухас-тăк,
Çукки — ун вырăнне?
Енчен те пирĕн халăх
Тăрас-тăк тÿрленсе,
Лешсен хăйхи кĕперĕ
Анас-тăк çĕмĕрĕлсе?
Вара эпир халь курнă
Суя пакăлтисене
Пĕлетчĕç: путмашкăн
Пит ырă мар-и тем?
Вара хăйсене хирĕç
Калĕçĕ хамăрах:
«Вăл, атьсем, хĕрхенĕр —
Анса кайсамăрах!»

1906

А. АЛГА куçарнă.



Ÿкерчĕк çинче: Дрогобыч облаçĕнчи Нагуевичи ялĕнчи Я. И. Франко музейĕ. Ăна 1946 çулхи августăн 27-мĕшĕнче уçнă. П. Чичкаков художник ÿкерчĕкĕсем.



Ÿкерчĕк çинче: Львов хулинчи И. Я. Франко музейĕ. Ку çурта 1901 çулта лартнă, ăна тунă çĕрте И. Франко хăй те ĕçленĕ.

Иван Франко

ЮРАТУ ÇЫРĂВĔ

Шанатăп: çитĕ кĕтсе суннă кунăм;
Эп çăлăнăп, тĕл пулăп санпала.
Усал çынсем тискер ултавпала
Ятарнă мăйкăçа таткалăп, чунăм!
Таткалăпах тапăнтарап тăлла!
Çумран тытса пĕр утăп эп хыттăн
Йăваш пулма хушин вĕс хĕрсе!
Шанатăп: пирĕн туйăма — вăл малтăн —
Нихçан та, тусăм, тутăх витмессе.

Çавнăçĕм, çитĕ кĕтсе суннă кунăм;
Йĕрсе эп ыткăнăп сан ытамна.
Вара эс манăн инкесене мана
Пĕлтерĕç сан хĕрÿллĕнех чуптунă
Кăвар пек тутисем. Кĕтсем ăна!
Сĕм тамăк тем те шутласа кăларĕ,
Чиркÿ пире тек уйрăлнă тăвать.
Анчах мĕскер тытса чарма пултарĕ
Сан çĕр çинчи таса юратăва?

Мĕнпур мăйкăçсене, пур сăнчăра та —
Вăл вăхăт çитĕ — татăпăр йăлтах!
Чунран йăлт ытăпăр çав самантрах
Пур усала, пур çилĕ-хаяра та.
Кÿренĕç те унта эп юлтăрах!
Пире чуна илес пекех кышланă
Мĕн ĕмĕр-ĕмĕрех вăл — çав ăнан.
Телейлĕсем пуç тăррине çĕкленĕн
Хура сăнпе эп курчăр-и нихçан!

Шанатăп: çитĕ çынсен пĕтнĕ кунĕ!
Инсĕмĕр пек, вĕсем хăват пухса,
Вăранĕç те, тĕттĕмлĕхрен тухса,
Кивве аркатĕç. Хăтăлĕ çын чунĕ,
Тин ирĕк тупнă кăкăрпа тăрса,
Ун чух савăнăçпа çын йĕрĕ, кулĕ,
Пĕрне-пĕри ыталĕ тăвалла...
Чуралăхпа асап тĕнчи вара
Ачсем валли хăруш юмах çеç пулĕ.

1878 ç. Майăн 1-мĕшĕ.

А. АЛГА куçарнă.

АСЛĂ ПИСАТЕЛЬ 100 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ЯТПА

Украина аслă писателĕ Иван Франко çуралнăранпа 100 çул тултарнă ятпа паян каçхине Шупашкарта, хулари паркра, чаплă каç пулать. Ăна Чăваш республикинчи Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен комитет, Писательсен союзĕ, Культура министерстви ирттереççĕ.

Чаплă ларура Иван Франко пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен Н. Ильбеков доклад тăвать. А. Алга, Г. Ефимов, А. Эсхель поэтсем Украина писателĕн сăввисене вуласа параççĕ.

Иван Франко

Калав

Кĕрĕк историйĕ

Пурăннă тет пĕр кĕрĕк. Сурăх тирĕнчен çĕлетнĕскер, ытла çĕнех те, сапăклах та мар, чылай тăхăннăскер, тар шăрши çапнăскер, ĕлĕк илем кÿрсе тăнă чĕнтĕр-эрешĕсем шупкаланса кайнăскер. Пĕр сăмахпа — халĕ ĕнтĕ вăл кулленхи тăхăнмалли кĕрĕк кăна, этнографсемшĕн те интереслĕ мар; илемĕпе те никам енчен те уйрăлсах тăмасть.

Анчах çапах та вăл çав тери мухтанчăк пулнă; тĕттĕм кассинче, хăй хуçин вырăнĕ тĕлĕнче пăтара çакăнса тăнă вăхăтсенче хăйпе-хăй калаçнă чухне, темĕн пекех мăнаçланнă, çав тери каппайнă.

«Ара, — тенĕ вăл, — пĕр-пĕр кĕрĕк, пĕр-пĕр хаклă тиртен çĕленĕ кĕрĕк е пĕр-пĕр пуянăн ман пек мухтава е хисепе тивĕç-и? Чăнах та, хаклă пустав витнĕ тилĕ кĕрĕкĕсене темĕн пекех мухтаççĕ, вĕсен умĕнче çĕлĕк хываççĕ, пуп ризисене те пысăк янахне кураççĕ, анчах ку вăл нимĕне те пĕлтермест! Ку йăлтах пустуй кăна! Тĕрĕссипе каласан, мĕн чапех пултăр вара вĕсен? Пĕри тепринчен хаклăрах — çавă кăна. Ăçта вĕсен манпа, ним мар чухăн кĕрĕкпе танлашма! Эпĕ хамăн ăшшăмпа пĕтĕм çемьене ăшăтса пурăнатăп. Çапла! Хĕллехнех калама пултаратăп, — эпĕ пулмасан, ман хуçа килĕшĕнчен нихăшĕ те, ара çав, нихăшĕ те хĕл сивви пÿртрен тухса кураймĕччĕ. Эпĕ — вĕсен пĕртен-пĕр çивĕттирĕ, пĕртен-пĕр ăшă тумтирĕ. Тилĕ е кашкăр тирĕнчен çĕлетнĕ çав чаплă кĕрĕксенчен хăшĕ те пулин калаччăр мана: хăйĕн хуçишĕн пĕтĕм чунне паракан ман пек тепĕр тÿрĕ кăмăллă тумтир тупăйĕç-и вĕсем!?

Автансем пĕрремĕш хут авăтса ярсанах ман хуçа сиксе тăрать те мана пăтаран илсе тăхăнса витене тухать, выльăхсене апат парать. Унтан таврăнать те каллех ĕçе тытăнать; лаши валли апат хатĕрлет, — арăмĕ çав вăхăтра мана пĕркенет те ĕне сума тухса каять. Хуçа арăмĕ ĕне суса пĕтерет кăна, каллех мана хуçа тăхăнать, картишне вутă çурма тухать. Вутă çурса хатĕрлет, çăлтан шыв ăсса лашине, ытти выльăхсене шăварать, шыв çĕклесе таврăнать, — мана пурпĕрех канăç çук. Самантрах мана вĕсен хĕрĕ тăхăнса ярать — унăн пĕр кашăк апатшăн тата спаççипăшăн пуян кÿршĕ патне çăм арлама каймалла. Вăл унта пырса çитет кăна, лешĕн тарçи мана каялла, киле илсе килет, — манăн каллех тепĕр çĕре каймалла. Хуçан çичĕ çулхи ывăлĕ пĕр татăк çăкăрпа мăра тата лĕп шÿрпе çиет те шкула чупать. Вăл та, эпĕ ун ури тупанĕ патнех çитетĕп, юр çийĕнех сĕтĕрĕнсе пыратăп пулин те, хăйĕн пĕчĕк шăмшакĕ çине мана уртса ярать. Çитсе-çитменех, шкул çенĕхĕнчех мана тепĕр пуян кÿршĕн тарçи хывса илет те каллех киле сĕтĕрет — ман хуçана вĕсем патне тырă çапма е тислĕк турттарма чĕнеççĕ иккен. Кăнтăрлалла вара, ман хуçа ачи шкултан таврăнас тĕле, мана каллех шкула леçеççĕ, — ман ăна сивĕрен хÿтĕлемелле. Килтен мана хамăн хуçа ĕçленĕ çĕре йăтса каяççĕ, каçхине вара, хуçа таврăнсан, унăн хĕрне илме каймалла. Çапла вара эпĕ, пĕр тĕртмелли йĕке пек, кунĕ-кунĕпе пĕр çĕртен тепĕр çĕре, пĕрин çурăмĕ çинчен теприн çурăмĕ çине куçса çÿретĕп; мана ялан хапăл туса кĕтеççĕ, эпĕ те хамăн ĕçе тума ялан хавас. Мĕн тăвăн ĕнтĕ, çапла пурăнни вăл — усăсăр пурăнни мар! Ку ĕнтĕ вăл хамăн тивĕçе юратни, ялан усăллă пулмаллине пĕлтерет. Çапла пурăнсан, хăвăн тивĕçне пурнăçланишĕн кăмăллă туйма, мăнаçлă пулма ирĕк парать».

Çапла шухăшланă ырă кăмăллă кĕрĕк. Пĕр çакă кăна унăн кăмăлне кăштах пăсать: пит хăвăрт кивелсе пырать-çке-ха хăй.

«Туйтăп — нумаях тÿсейес çук. Часах çĕвесем сÿтĕлме пуçлĕç, çăмĕ тăкăнĕ, тирĕ те ав, унтан-кунтан çурăлкалать. Мĕн тăвĕ вара манăн мĕскĕн хуçам? Пĕлетĕп, çĕнĕ кĕрĕк çĕлетме тахçантанпах ĕмĕтленет-ха вăл, анчах ĕмĕчĕ тулассин ытла та инçе-çке! Улпут вăрманне касса пĕтернĕренпе хĕлле лава çÿресе укçа тупма нимле май та юлмарĕ. Сурăхсем çук унăн, алă вĕççĕн ĕçлесе илнĕ укçа хăйне тăхăнмалăх туянма тата куланай тÿлеме аран-аран çиткелет. Кĕрĕк çĕлетесси çинчен шутламалла-и? Анчах кĕрĕксĕр хĕлле — вилĕмпе пĕрех! Ах, йывăр-çке вăл хресчен пурнăçĕ!»

II

Пĕрре çапла кĕрĕкĕн кулленхи пурнăçĕнче пысăк мар улшăну пулса иртрĕ.

Ирхине ялан пекех пулчĕ.

Кĕрĕк ачапа шкула леçрĕ, анчах часах ача ашшĕ кĕпе вĕççĕнех шкула чупса пычĕ. Чупса пычĕ те, — учитель пымаччĕ-ха, — шăнса кÿтнĕ аллисене вĕре-вĕре ăшăтса, ачине васкавлăн çапла каларĕ:

— Юрко, мана кĕрĕке пар-ха! Пан улпут мана чĕнет, унăн лавĕсемпе вăрмана каймалла.

— Ай, кĕрĕксĕр эпĕ киле епле таврăнам-ха, — терĕ ача, ĕнсине хыçкаласа.

— Урусене куллуççи çине хур те, маййăм, чуп сиккипе, ăшăнăн, сана нимех те пулас çук, — терĕ ашшĕ, кĕрĕке тăхăнса. — Тен, турă парсан, пан улпут патĕнче пăшлăрах ĕç те тупăнĕ, тепĕр кĕрĕк туянмалăх ĕçлесе илме май пулĕ, — хушса хучĕ вăл, аптраса ÿкнĕ ывăлне лăплантарасшăн пулса.

Вара кĕрĕк кунĕпех хуçа çурăмĕ çинчен анмарĕ. Каçхине хайхи иккĕшĕ те киле таврăнсан, кураççĕ: хăрах çанни вĕçĕ тĕлĕнчен çурăлнă; эконом укçа сахал тÿленĕ тата ыран ĕçе пырасси çинчен çăвар та уçман, — акă мĕншĕн чунтанах кÿреннĕ, мăкăртатнă хуçа.

Тата пысăкрах хурлăх килте пулнă иккен. Юрко чирлĕ выртнă. Вăл вĕри чирпе асапланнă, тĕрлĕн кайса пĕрехмай аташнă: «Аяк чикет, ах, чикет-çке», — тесе ахлатнă.

Çав кунтанпа кĕрĕк пурнăçĕ йăлтах улшăнчĕ. Ача шкула çÿремест, ăна сыватас тесе, мĕн кăна туса пăхмарĕç пулĕ ашшĕпе амăшĕ, юмăç та пăхтарчĕç, темĕнле шывсем те ĕçтерчĕç, пăйтах куççулĕ тăкрĕç, — сăмахпа каласа пама та хал çитес çук. Анчах çапах та тепĕр икĕ эрнерен Юрко сывалчĕ. Çирĕп çав вăл хресчен ачи, шăмми-шакки! Вĕри чирĕ иртсе кайрĕ. Ÿслĕк пĕтрĕ, аякĕ чикмест, — пăр-хăлĕ çук кăна. Ача шкула каясшăн, анчах амăшĕ, вăл халсăррине кура, ăна шкула ямасть.

Пĕррехинче вара, пĕтĕм килйыш сĕтел хушшинче шÿрпе сыпса ларнă вăхăтра, — кĕрĕк пăтара çакăнса тăратчĕ-ха, — алăк уçăлчĕ те пÿрте ялти аслă власть: десятскипе выборнăй кĕрсе тăчĕç.

— Мухтав Иисуса, — терĕç вĕсем.

— Ĕмĕр-ĕмĕрех турра мухтав! — терĕ хуçа, сĕтел хушшинчен тухса.

— Апат вăхăчĕ, — терĕ хуçа арăмĕ те.

— Светуй турă хăвпе, ырлăх пултăр, — терĕ ялти власть.

Пÿртре пĕр вăхăт шăпăртах пулчĕ.

— Тархасшăн, ларăр, — сĕнчĕ килхуçи. Власть тенкел çине ларчĕ.

— Тем сăмахпа çÿретĕр ĕнтĕ, пансем? — ыйтрĕ килхуçи.

— Ара-çке, Иван кум, эпир хамăр ирĕкпе мар, — тавăрчĕ выборнăй, ĕнсине хыçкаласа. — Пире пан староста ячĕ.

— Мĕн айăплă пулнă вара? — аптраса ыйтрĕ килхуçи. — Парăмсене татнăччĕ-çке?

— Кунта парăм пирки мар-ха, — терĕ десятски. — Ачăра шкула ямастăр эсир. Çавăншăн пан учитель сире штраф хунă. Пĕр гульден тÿлемеллĕх пулать.

— Гульден? Господи! — кăшкăрса ячĕ Иван. — Ара, ача чирлĕ выртрĕ вĕт!

— Кам пĕлнĕ ăна? Мĕншĕн учителе каламан?

— Турăçăмах! Ун пирки шухăшласа тăма-и-ха унта? — терĕ Иван.

— Ну, кумăм эпир те айăплă мар. Çавăнпа пĕр гульден штраф илме хушнă пире, çавă çеç.

— Касăр, пусăр мана, хĕртнĕ тимĕрпе пĕçертĕр, пурпĕрех эсир ман килĕмре пĕр гульден тупаймăр.

— Ун пирки пирĕн ĕç çук, кум, — терĕç выборнăйпа десятски. — Эпир, кум, хамăрăн ирĕкпе мар, пире хушнă — тăвас пулать. Укçа çук пулсан, мĕн илме лекнĕ, çавна илетпĕр. Акă кĕрĕк!

— Кум, ку кĕрĕк — пирĕн пĕртен-пĕр пурлăхăмăр! — çухăрса ячĕ аптраса ÿкнĕ килхуçи. — Унсăрăн эпир çак сивĕре пÿртрен те тухаймастпăр!

Ÿкĕтлени-тархаслани ахалех пулчĕ. Кĕрĕк десятски аллинче ĕнтĕ. Лешĕ, ăна енчен-енне çавăркаласа, çапла каларĕ:

— Пĕр-икĕ гульден тăрать-ха ку!

— Ан хăра, кум, — лăплантарать килхуçине выборнăйĕ. — Сан кĕрĕку çухалмасть. Ăна Юдка патне леçсе хуратпăр кăна. Пани укçа пырса паратăн, часах илсе каятăн.

— Турăран хăрасамăрччĕ, кум! — тархаслать Иван. — Ăçтан тупам-ха? Кĕрĕксĕр хĕлле нимĕн те ĕçлесе илес çук!

— Пирĕн мĕн ĕç? Хуть те ăçтан туп! Хушнă пире, çавă çеç.

— Кĕрĕкĕ кирĕ-ха, — тет килхуçи арăмĕ, — кум, тума пĕлмен ăна. — Чăлана пăрахиччен ăна Юдка хуть типĕтĕрччĕ.

Анчах власть ку сăмахсене илтмерĕ, кĕрĕке хул хушшине хĕстерчĕ те, сыпуллашмасăрах тухса кайрĕ. Килте юлакансем, чи хаклă çынна пытарнă чухнехи пекех чĕмсĕррĕн тăрса юлчĕç. Чылай вăхăт нихăшĕ те сăмах чĕнмерĕ, унтан хĕрарăмсем, тахăшĕ команда панă евĕр, шарлах çухăрса ячĕç, ача куççульне çаннипе шăлма тытăнчĕ, килхуçи хăй, кантăк умĕнче пуç усса лараканскер, çавра çил пек килсе кĕрсе, пĕтĕм çемьен пĕртен-пĕр пурлăхне йăтса тухса, чухăнтан та чухăна тăратса хăварнă власть çине хурлăхлăн пăхса юлчĕ кăна.

Çав кунтанпа эрне иртрĕ. Тепле майпа-çке Иван пĕр гульден таçтан тупкаларĕ те, ăна старостăна леçсе парса кĕрĕке каялла илмелле турĕ. Десятскипе пĕрле вăл Юдка патне кайрĕ, кĕрĕк пурпĕрех киле таврăнать-ха, тесе савăнчĕ. Юдка кĕрĕке чăлантан илсе тухнă чухне Иван анкăранах пăнтăх шăршине туйрĕ. Нÿрĕ кĕрĕк, эрне хушши енчĕ чăланта выртнăскер, йăлтах пăнтăхса çĕрсе кайнă, ăна тăхăнма майĕ те çук, çĕпĕрех каять. Иван ахлатса илчĕ те пуçне çупăрласа тытрĕ.

— Асатти çаптăрах сире! — терĕ вăл, пĕрре Юдка енне, тепре десятски енне пăхса.

— Эпĕ мĕншĕн айăплă? — хирĕç чĕнчĕ Юдка. — Сирĕн кĕрĕке манăн типĕтмеллеччĕ-им?

— Эпĕ те пачах айăплă мар, — тавăрчĕ десятски. — Илсе кайма хушнă мана — илсе кайнă, çавă çеç.

— Турăран хăрасамăрччĕ! — кăшкăрать Иван. — Халĕ ĕнтĕ эпĕ укçа та тÿлерĕм, кĕрĕке те çухатрăм! Кам тÿрлетĕ çак тĕрĕсмарлăха?

Юдкăпа десятски аллисемпе сулчĕç кăна.

1892.

Ст. ПАВЛОВ куçарнă.

Тĕнчери лару-тару

ТĔНЧЕРИ ЛАРУ-ТАРУ
ЛОНДОНРИ КОНФЕРЕНЦИ ХЫÇÇĂН

Çак кунсенче Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă Лондонри конференци хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ.

Конференцин юлашки ларăвĕсенчен пĕринче США делегацийĕ, Англи, Франци тата Çĕнĕ Зеланди представителĕсемпе пĕрле, конференци ĕçне вĕçлеме демократилле мар йĕрке йышăнтарма хăтланнă. Çакă вăл вĕсен пĕр сĕнĕвĕнче палăрнă. Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва татса пама Америка сĕннĕ проектшăн тăракансен представителĕсен ушкăнĕ çак проекта Египета патăр, Египет правительстви ăна йышăнма килĕшнине килĕшменни çинчен ыйтса пĕлтĕр, тенĕ çав сĕнӳре. США делегацийĕпе хĕвеланăçĕнчи ытти державăсен делегацийĕсем Египета Америка сĕнĕвĕсене ультиматумлă требовани лартса йышăнтарма хăтланнине хирĕç СССР, Инди тата Цейлон делегацийĕсем татăклăнах каланă. Юлашкинчен вара конференци участникĕсем урăх сĕнĕве йышăнма килĕшнĕ. Суэц каналĕ пирки пухăннă конференцие хутшăннă 22 çĕршыв представителĕсем конференци председательне хăйсен ларăвĕсен стенографи отчетне Египет правительствине пĕлтерме хушаççĕ, тенĕ ку сĕнӳре. Ку вăл Египет правительствине конференцире сӳтсе явнă ыйту тăрăх каланă мĕнпур шухăшсемпе сĕнӳсем çинчен пĕлтермелле тенине пĕлтерет.

Çак ыйтăва татса парас тĕлĕшпе конференци участникĕсем пĕр пек шухăш тупайман пулсан та, конференци хăшпĕр пахха результатсем панă. Вăл Египет правительстви Суэц каналне национализацилени пирки хĕвеланăçĕнчи державăсем юриех йывăрлатнă лару-тăрăва çăмăллатма пулăшнă. Хĕвеланăçĕнчи державăсен чăрсăрланакан представителĕсем çакна курса ĕненнĕ: делегацисен ытларахăшĕ Египета вăйпа хĕсес шухăша сивлет, Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйтăва мирлĕн татса пама тăрăшать. Çак ĕçре СССР, Инди тата Индонези делегацийĕсен позицийĕ пысăк вырăн йышăннă. Вĕсем Египетăн суверенлă правине татăклăн хӳтĕленĕ.

Çакна та палăртас пулать: Лондонри конференцие хутшăннисенчен пĕри те Суэц каналĕн халиччен пулнă компанине хӳтĕлесе каламан, Египет правительстви канала национализацилесси çинчен йышăннă решени тĕрĕс мар тесе каламан. «Лондонри конференци,—тесе пăшăрханса çырнă çак кунсенче Америкăри Юнайтед Пресс агентстви,—Насера хăшпĕр çĕнтерӳ кӳчĕ, мĕншĕн тесен конференцие хутшăннă 22 çĕршыв представителĕсем Египет правительстви канала национализацилеме килĕшес пулать тесе шутлаççĕ».

Анчах та хĕвеланăçĕнчи державăсем канал хăйсен аллинчен вĕçерĕннишĕн çăмăллăнах килĕшĕç тесе шутлани тĕрĕс пулмĕччĕ. Вĕсем канала тытса тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен «тĕнчери çĕршывсен управленийĕ» тенĕскерпе йышăнтармалли плансене пăрахăçламан. Çак управлени тенĕскер, Лондонри конференцие хутшăннă Совет делегацийĕн пуçлăхĕ Д. Т. Шепилов каланă тăрăх, «колониализм кăштах çĕнетнĕ формăпа палăрни» пулса тăрать, урăх нимĕн те мар. «Насера канала хăй аллинче тытса тăма ирĕк памалла мар, ăна çавăн пек власть парас та çук», тесе çырнă конференци хупăннă кун Англири «Дейли мейл» хаçат. Хĕвеланăçĕнчи çĕршывсенче власра тăракан ушкăнсен нумай представителĕсем çавăн пек шухăшлаççĕ, халĕ вĕсем хăйсен плансене мĕнле пурнăçласси çинчен кăна шутлаççĕ.

Августăн 23-мĕшĕнче Лондонра тухса тăракан «Файнэншл таймс» хаçат Египет правительстви Суэц каналĕ тăрăх суднăсем çӳретес ĕçне начарлатма мĕнле провокаци тумалли çинчен пысăк статья пичетлесе кăларнă. Ун чухне вара Египета вăл суднăсем çӳретес ирĕклĕхе пăсрĕ тесе айăплама, Египет тĕлĕшпе санкцисем йышăнма май пулĕччĕ, тет хаçат. Ку тĕлĕшпе хаçат канал тăрăх суднăсем çӳретнĕшĕн Египет администрацине тӳлемешкĕн чарăнма сĕнет. «Дейли геральд» хаçат обозревателĕ Юэр пĕлтернĕ тăрăх, Египета канал тăрăх суднăсем çӳретес ĕçе ăнăçлă пурнăçласа пымашкăн чăрмантармалли тепĕр план та пур. Ăна «лоцмансен санкцийĕсем» тесе ят панă. Ĕç акă мĕнре: Суэц каналĕн халиччен пулнă компанийĕ лоцмансене тата техника тĕлĕшпе ĕçлекен ытти çынсене Египетран чĕнсе илме шутлать. Çакна ăна Англипе Франци правительствисем лайăх пĕлеççĕ. «Çапла тусан,—тесе çырнă Юнайтед Пресс агентстви,—канал тăрăх суднăсем çӳретес ĕç чарăнса ларĕ, вара Англипе Франци лару-тăрăва йĕркелеме мерăсем йышăнмалла пулса тăрĕ».

Çаксем пурте вĕсем колонизаторсем Египета хирĕç çĕнĕ провокацилĕ ĕçсем организацилеме пултарасси çинчен калаççĕ.

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИРИ РЕАКЦИН НАСТУПЛЕНИЙĔ

Хĕвеланăç Германири власра тăракан ушкăнсем Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарасси çинчен решени йышăннă. Августăн 17-мĕшĕнче Карлсруэ хулинчи конституциллĕ суд: Германири Коммунистсен партийĕ вăл «конституцие хирĕçле» ĕçсем тăвакан парти пулса тăрать, тесе пĕлтернĕ, ăна ĕçлеме чармалла, тесе йышăннă. Çак киревсĕр ĕç Бонри правительствăн пĕтĕм политикинчен тухса тăнă.

Федеративлă Германи Республикинчи власра тăракан ушкăнсем, нимĕç халăхĕн шухăш-кăмăлне пăхмасăр, анчах та хĕвеланăçĕнчи державăсем пĕтĕмпех ырланипе уçă курса, темиçе çул хушши ĕнтĕ Хĕвеланăç Германие çĕнĕрен милитаризацилемелли политика тытса пыраççĕ. Ют çĕршыв капиталĕ пулăшнипе Хĕвеланăç Германири монополисем хăйсен финанспа экономика тĕлĕшĕнчи хăватне çĕнĕрен ӳстерчĕ, çар промышленноçне аталантарса вăйлатма никĕс хунă. Хăйсен çак тĕллевне пурнăçланă хыççăн реваншистла ушкăнсем Германи империне çĕнĕрен туса хурасси çинчен калаçма тытăннă. Икĕ Германи государствине пĕрлештересси çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явнă чухне вĕсем монополилле капитал власне пĕтĕм Германие сарасси çинчен калаççĕ.

Хăйсен плансене пурнăçламашкăн Германин вăрçă машинине кирек мĕнле пулсан та хăвăртрах туса хума тăрăшса, юлашки вăхăтра Хĕвеланăç Германири власра тăракан ушкăнсем мире юратакан мĕнпур халăхсене тарăхтаракан чылай утăмсем турĕç. Вĕсем пурне те тивĕç çар повинноçĕ çинчен закон йышăнчĕç. Парижра тунă килĕшӳсенче палăртса хунă пек 500 пин салтакран мар, сахалтан та 800 пин салтакран тăракан çар тумалли плансем хатĕрлеççĕ. Нумай промышленность предприятийĕсем çĕнĕрен тăвакан çар валли хĕçпăшал туса хатĕрлеме Аденауэр правительствинчен халех ĕнтĕ пысăк заказсем илнĕ.

Бонри правительство ĕçĕсем пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Çакна кура Хĕвеланăç Германири халăх массисем хăйсен çĕршывне çĕнĕрен милитаризацилессине хирĕç тăраççĕ. Пĕтĕм Германи халăхĕн интересĕсене палăртса тăракан Коммунистсен партийĕ Бонри правительствăн çарпа политика тĕлĕшĕнчи плансене хирĕç кĕрешекенсен малти ретĕнче пырать. Çавăнпа ĕнтĕ Хĕвеланăç Германири реакци Коммунистсен партине ĕçлеме чармалла тесе йышăннă.

Коммунистсен партине хирĕç çак хавара тахçантанах хатĕрленĕ. 1950 çултах ĕнтĕ Федеративлă Германи Республики правительствин пичетпе информаци ведомствин хальхи руководителĕ фон Эккардт Хĕвеланăç Германири «Везеркурир» хаçатра çапла çырнă: Федеративлă Германи Республикинчи политикăлла партисене ĕçлесе тăмашкăн чармалли меслет «политика тĕлĕшпе кăмăла кайман мĕнпур йышши оппозицие» пусăрса лартмалли меслет пулса тăма пултарĕ, тенĕ. Калас пулать: Хĕвеланăç Германи влаçĕсем Коммунистсен партине кăна мар, хăйсен плансене хирĕç тăракан мĕнпур вăйсене çавнашкал оппозици шутне кĕртеççĕ.

Çĕршыва милитаризацилемелли тата фашистла йĕрке туса хумалли çул çине тăнă Бонри влаçсем, гитлеровецсем пекех ĕнтĕ, миршĕн, вăрçа хирĕç кĕрешекен мĕнпур демократилле вăйсене хĕсĕрлесе пусарса лартма шут тытнă. Çакна социал-демократсен партийĕн руководстви шута илмен, вăл коммунистсен чĕнĕвне йышăнман, коммунистсен партине ĕçлеме чарассине хирĕç пĕрле кĕрешме килĕшмен. Çакăнпа вара социал-демократсен руководителĕсем Коммунистсен партине хирĕç террорла ĕç тума пулăшнă кăна мар, ытти демократилле организацисем умне тухса тăнă хăрушлăха та ӳстернĕ. Федеративлă Германи Республикинче халĕ влаçсен мĕнпур органĕсене çакăн пек кăтарту панă: «хăйсене социал-демократсем пек кăтартма хăтланакан коммунистсене пĕр шеллемесĕр хĕсĕрлемелле», тенĕ. Халех ĕнтĕ «Ди Вельт» хаçат: «коммунистсем тымар яма пултаракан мĕнпур партисемпе организацисене..., урăхла каласан, Германири социал-демократсен партине, профсоюзсене тата сылтăмри партисене салатса ямалла», тесе вăкăрать.

Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарни вăл пĕтĕм Германи халăхне хирĕç авалă наступлени пуçланине пĕлтерет. Çак ĕç тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатассине хирĕç, мирпе демократи вăйĕсене хирĕç пырать.

Н. ЧИГИРЬ.

Польшăра ялхуçалăх машинисем тăвас ĕç вăйланса пырать

ВАРШАВА, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибуна люду» хаçат Польшăра ялхуçалăх машинисем тăвас ĕç вăйланса пыни çинчен Польша Халăх Республикин машиностроени министрĕн заместителĕ В. Габинский каласа панине пичетлесе кăларнă.

Автор çакна палăртать: çитес виçĕ çул хушшинче ялхуçалăх машинисем тăвас ĕçе вăйлатма государство миллиард злотый ытла укçа уйăрса парать. Çак укçапа Плоцк хулинчи ялхуçалăх машинисен заводне туса çитереççĕ, Отшельц-Опольскири завода пысăклатаççĕ. Кунсăр пуçне, Кутнопа Грудзендри ялхуçалăх машинисем тăвакан заводсене реконструкцилеççĕ.

1960 çулта, Польша пилĕкçуллăхĕн юлашки çулĕнче, тесе кăтартса парать автор, ялхуçалăх машинисем туса кăларасси, кăçалхипе танлаштарсан, 3,5 хут ӳсет. Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле çĕршыв суллерех трактора ĕçлемелли 10 пин сеялка, 3,5 пин комбайн, çавăн пекех ытти ялхуçалăх машинисем нумай туса кăларма тытăнать.

Кашни предприятире конструктор бюровĕсем пулаççĕ. Вĕсем çĕнĕ йышши ялхуçалăх машинисене производствăна хăвăрт кĕртес, çавăн пекех хальхи вăхăтра туса кăларакан ялхуçалăх машинисене реконструкцилес тĕллевпе ĕçлеççĕ.

Чехословаки ялхуçалăхне механизацилеççĕ

ПРАГА, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Руде право» хаçат çапла çырать: кăçал Чехословакире пысăк тухăçлă тырпул пухса кĕртнĕ. Çакă вăл ялхуçалăхне кулленех техникăпа пуянлатса пынинчен те нумай килнĕ.

Сăмахран, республикăри ялсене иртнĕ çул кăна 5.200 трактор, тĕштырă пухса кĕртмелли 1.443 комбайн, сахăр кăшманĕ пухса кĕртмелли 732 комбайн, 929 молотилка, йĕтĕн пухса кĕртмелли 147 машина тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай ярса панă. МТС-сем тунă мĕнпур ĕçсен хисепĕ иртнĕ çул кăна 700 пин гектар чухлĕ ӳснĕ (çемçе суха çине куçарса шутласан). Кăçал тырпула иртнĕ çулхисенчен лайăхрах пухса кĕртнĕ. Пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх кооперативĕсенче тырпула пуринчен ытларах МТС-сен машинисемпе вырса пухнă.

Çитес çулсенче ялхуçалăх ĕçĕсене ытларах та ытларах механизацилеме палăртнă. Çак ĕç пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх кооперативĕсенче уйрăмах вăйлăн ӳсмелле. Пилĕк çул хушшинче тырпула машинăсемпе пухса кĕртесси икĕ хут ӳсет. Çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх фермисенчи, пĕрлĕхлĕ ялхуçалăх кооперативĕсенчи тата государство хуçалăхĕсенчи нумай вăй хурса тумалли ĕçсене те механизацилеççĕ.

ВЕЛИКОБРИТАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ПОЛИТИКА КОМИТЕЧĔН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ЛОНДОН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Великобританири Коммунистсен партийĕн политика комитечĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта вăл халăха хĕвеланăçĕнчи державăсем Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту тăрăх хăйсем йышăннă решение Египет правительствине ирĕксĕрлесе йышăнтарма хăтланнине хирĕç протестлеме августăн 26-мĕшĕнче иртерекен демонстрацие хутшăнма чĕнет.

«Хĕвеланăçĕнчи державăсем,—тенĕ заявленире,—Египетпа мирлĕ калаçусем [illegible] тивĕçлĕ сӳтсе явма килĕшменнине уçăмлăн кăтартса пачĕç.

Вĕсем Египет умне ультиматум лартма тата ăна хăйсен политикине йышăнтарма тăрăшаççĕ, çакă вăл интернационализацилес ятпа витĕнсе Суэц каналне империалистсен контрольне тăмалли йĕрке тунине пĕлтерет.

Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхăн пысăк пайĕ çав политикăна хирĕç тăрать, Египет тата арабсен государствисем çав политикăна [illegible]. Мир интересĕсемпе Англи халăхĕн интересĕсем çав политикăна [illegible] хушаççĕ».

ИТАЛИ ОБЩЕСТВЕННОÇĔ ГЕРМАНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИНЕ ĔÇЛЕМЕ ЧАРНИНЕ ХИРĔÇ ПРОТЕСТЛЕТ

РИМ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç протестлесси Италире вăйланса пырать. Миланра Коммунистсен партийĕн, социалистсен партийĕн, республиканецсен партийĕн, «халăх пĕрлĕхĕ» юхăмĕн, пĕтĕм çĕршыври ĕç конфедерацийĕн, Италири ĕçлев союзĕн, Италири партизансен нацилле ассоциацийĕн вырăнти организацийĕсен представителĕсем пĕрле çырнă манифест кăларнă. Çав манифестра вĕсем Бонри влаçсен киревсĕр ĕçĕсене хирĕç протестлеççĕ. Германири Коммунистсен партине ĕçлеме чарнине хирĕç протестласа Римра, рабочисем пурăнакан Ченточелле кварталĕнче, демократилле çамрăксен представителĕсем йывăçран тунă свастика—фашизм символне вучах çунтарса янă. Ливорно портĕнчи рабочисем, Терни, Мачерат, Бриндизи хулисенчи тата ытти хуласенчи ĕçсыннисем протестлесе çырнă резолюцисем йышăннă.

ЛИВАН ПРАВИТЕЛЬСТВИН РЕШЕНИЙĔ

БЕЙРУТ, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Жур» тата «Ориан» хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Ливан министрĕсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Унта ют çĕршывсен Ливанри мĕнпур компанийĕсенчен налогсем илесси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртес ыйтăва сӳтсе явнă.

Хаçатсем çапла çыраççĕ: Ливан правительстви Англин «Ирак Петролеум» компанийĕнчен 33 миллион фунт налог илмелле тунă. Çав шутра 22 миллион фунтне 1952 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа хальхи вăхăта çитиччен тапхăршăн налог вырăнне, 11 миллион фунтне çак компани тупăшсем çинчен суя сведенисем панăшăн штраф вырăнне илеççĕ.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Ливан финанс министерстви Бейрут порчĕн Франци компанине çулсеренех 4 миллион фунт тӳлесе тăма хушса требовани лартнă.

Тĕнчери çĕршывсен ярмаркинчи Совет павильонĕ

АНКАРА, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕнчери çĕршывсен Измир хулинчи ярмаркинчи Совет павильонне малтанхи икĕ кун хушшинче 75 пин çынна яхăн пырса курнă. Совет Союзĕн экспоначĕсене вырăнти халăхпа ют çĕршыв çыннисем пысăка хурса хаклаççĕ.

Отзывсен кĕнеки çине Турции экономика суту-илӳ министрĕ Зейят Мандалинджи çапла çырса хăварнă: «Совет Союзĕн павильонĕ мĕн тери кăмăла кайни çинчен калама витĕмлĕ сăмахсем тупма та йывăр», тенĕ. Стамбулри суту-илӳ палатин председателĕ: «Совет Союзĕнчи техника прогресĕ мана тĕлĕнтерсе савăнтарать», тесе çырса хăварнă.

СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ФИНЛЯНДИ СТРЕЛОКĔСЕН АМĂРТĂВĔ

ХЕЛЬСИНКИ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 22—23-мĕшĕсенче Хельсинки патĕнчи Малмире Совет Союзĕпе Финлянди командисем хушшинче тĕл перес тĕлĕшпе ăмăрту пулса иртнĕ.

Ăмăртура Совет Союзĕн стрелокĕсем малта пулнă. Вĕсем пурĕ 211 балл, Финлянди стрелокĕсем—119 балл пухнă.

ТУНИС ПРАВИТЕЛЬСТВИН ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ТРИПОЛИ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Тунисăн Ливири посольстви Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки Тунис правительстви тунă заявленине салатса панă. Унта çапла каланă: Суэц каналĕн компанине национализациленни вăл никама пăхăнман Египет государствин законлă правине пулса тăрать.

Тунис правительстви хирĕçӳсене мирлĕн татса парассишĕн тăрать. Вăл, тенĕ заявленире, хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем тăшманла ĕçсем тума чарăнĕç, Вăтаçĕр тинĕс районĕнчи лару-тăрăва сивĕчлетекен, пĕтĕм тĕнчери миршĕн хăрушлăх кăларса тăратакан ĕçсем тумĕç, тесе шанса тăрать.

СИРИПЕ ЛИВАН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔСЕМ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ

БЕЙРУТ, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). «Телеграф» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Ливанри Софар хулинче Ливан премьер-министрĕ Абдаллах Яфи Сири премьер-министрĕпе Сабри Асалипе тĕл пулнă, Лондонри конференци ĕçĕн итогĕсем пирки калаçнă.

Хаçат çапла пĕлтерет: Сирипе Ливан премьер-министрĕсем Суэц каналĕ çинчен тăракан ыйту пирки хĕвеланăçĕнчи державăсем сĕннĕ проекта сивленĕ.

КĂНТĂР ВЬЕТНАМ ВЛАÇĔСЕН РЕАКЦИЛЛЕ ĔÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Сайгонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Кăнтăр Вьетнам правительстви «шпионла ĕçсене хирĕç тата государство интересĕсене сутăнне хирĕç кĕрешесси çинчен» текен указ пичетлесе кăларнă. Указ государствăшăн тăшманла организацие е мĕнле те пулин «коммунистла организацие» пулăшнăшăн тесе айăпланакан çынсене вĕлермелле тума е ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупса лартмалла тума палăртать. Указра коммунистсемпе суту-илӳ енĕпе вăртăн ĕçсем тăвакан çынсене каторгăра ĕçлеттермелле тăвасси çинчен каланă.

Шпионла ĕçсене хирĕç кĕрешнĕ пек кăтартса, Кăнтăр Вьетнам влаçĕсем хăйсен çĕршывĕ пĕрлештерессишĕн кĕрешекен прогрессивлă организацисемпе çынсем тĕлĕшпе тăвакан тискер ĕçсене законпа çирĕплетме тăрăшаççĕ.

ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИ ÇАРНЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРАÇÇĔ

БОНН, августăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕвеланăç Германи промышленноçĕн тĕрлĕ отраслĕсене, пуринчен малтан йывăр промышленноçа, Хĕвеланăç Германи çарĕ валли хĕçпăшал туса хатĕрлеме пысăк заказсем панă [illegible]. Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Федеративлă Германи Республикин оборона министерстви Хĕвеланăç Германири промышленность предприятийĕсенче 671 самолет, çав шутра 360 реактивлă самолет тума заказ панă. Çак самолетсене Хĕвеланăç Германин сывлăш-çар вăйĕсене хĕçпăшаллантарма тăваççĕ. «Дер миттаг» хаçат çакна палăртать: ку вăл Хĕвеланăç Германире тăвакан çарăн сывлăш-çар вăйĕсем валли панă иккĕмĕш чи пысăк заказ пулса тăрать. Хĕвеланăç Германире «самолетсем тăвас ĕç пуçланнине» пĕлтерет.

ПОРТУГАЛИ ВЛАÇĔСЕН КИРЕВСĔР ĔÇĔСЕМ

ДЕЛИ, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Делири радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер парламентăн аслă палатинче Инди премьер-министрĕ Неру çапла пĕлтернĕ: юлашки уйăхсенче Португали влаçĕсем Египетăн официальлă çыннисене Гоана пырса çӳреме чарса тăраççĕ.

Паллă ĕнтĕ, Индин Гоари консульствине иртнĕ çулхи сентябрь уйăхĕнче хупнă, Египет Португалин Инди территорийĕнчи колонийĕсенче Инди интересĕсене сыхлама обязательство илнĕ.

Д. Эйзенхауэр—США президентне суйлама тăратнă кандидат

САН-ФРАНЦИСКО, августăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Республиканецсен партийĕн съезчĕ Д. Эйзенхауэра республиканецсен партийĕнчен президента суйлама кандидата тăратнă. Суйлав ноябрĕн 6-мĕшĕнче пулать.

Вице-президента суйлама хальхи вице-президента Р. Никсона кандидата тăратнă.

Шанĕ пур, ĕçĕ çук

Шупашкар хула Совет сессийĕнчен

Ĕçсыннин депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн вунвиккĕмĕш сессийĕ хулари строительство ĕçĕсен планне мĕнле пурнăçласа пыни çинчен коммунальлă хуçалăх пайĕн заведующийĕ Гендельман юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ. Çак ыйтупах сессире хула Совечĕн коммунальлă хуçалăх енĕпе ĕçлекен яланхи комиссин председателĕ Тарасов юлташ содоклад туса пачĕ.

Калас пулать, сесси питĕ кирлĕ ыйтăва пăхса тухрĕ. Кăçалхи апрель уйăхĕнче хула Совечĕ благоустройство ĕçĕсен планне çирĕплетнĕ, хулана тирпейлĕ тытас, пурăнмалли çуртсем тăвас тата юсас ĕçсене пĕтĕмпех пурнăçлас тĕлĕшпе Саранск тата Йошкар-Ола хулисене ăмăртăва чĕннĕ. Унтанпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, анчах план пурнăçа кĕрсе пымасть-ха. Ăна çакă та лайăх çирĕплетсе парать: паянхи куна коммунальлă хуçалăх пайĕ благоустройство ĕçĕсем валли уйăрса панă укçа-тенкĕн 66,4 процентне çеç усă курнă. Юсав ĕçĕсем тума чи лайăх вăхăт иртсе пырать пулин те, тротуарсем, картлашкасем, кĕперсем, çăлсем юсама тытăнманпа пĕрех. 24 çăл вырăнне 6-шне кăна юсанă. Шупашкар—çырма-çатраллă хула, çырансем хулана сахал мар сиен кӳреççĕ. Вĕсене çирĕплетме государство укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать, анчах хула Совечĕн исполкомĕ çав укçа-тенкĕпе те усă курмасть.

Пуринишĕн те паллă, пурăнмалли çуртсем хулари ĕçсыннисем валли халĕхе çитмеççĕ-ха. Апла пулин те кашни çулах çуртсем тумалли план пурнăçа кĕрсе пымасть. Кăçал хулара 10,5 пин тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çуртсем тумалла. Çичĕ уйăхра çулталăк планне 43,8 процент кăна тултарнă. Хулари предприятисем, укçа-тенкĕ пур çинчех, хăйсен рабочийĕсемпе служащийĕсем валли çуртсем ытла та вăраххăн тăваççĕ. Сăмахран, электроаппаратура завочĕ çуртсем тумалли плана 24,5 процент кăна тултарнă. Строительство организацийĕсем япăх ĕçлеççĕ. Вĕсем çуллахи чи лайăх вăхăтра сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ, кĕркунне, йĕпе-сапа çанталăкра вара, васкаççĕ, çуртсене туса çитермесĕрех хуçисене параççĕ. Хула Совет исполкомĕ çавăн пек çуртсене йышăнать, вара пĕр-икĕ çултанах юсама тытăнать.

Çуртсем юсасси те çавăн пекех пулса пырать. Кăçал 22 çурт юсама палăртнă, çичĕ уйăхра 12-шне юсанă, икĕ уйăхра вара 10 çурт юсама тивет.

Сессире Гендельман юлташ депутатсене çакăн пек каларĕ: благоустройство енĕпе коммунальлă хуçалăх чылай ĕçсем туса иртерчĕ, мĕнпур плана тултарма пирĕн пур майсем те çителĕклĕ, анчах çав майсемпе халиччен кирлĕ пек усă курайман-ха. Кунта эпĕ хам та айăплă.

Çапла ĕнтĕ, хула Совет исполкомĕн работникĕсен мухтанасси, критикăна йышăнасси, сăмах парасси, ун хыççăн каллех вали-шали ĕçлесси йăлана кĕнĕ. Çавăнпа та депутатсем исполкома, унăн коммунальлă хуçалăх пайне тивĕçлипех критиклерĕç.

— Хула Совечĕ благоустройство ыйтăвĕсене кăçал иккĕмĕш хут ĕнтĕ сессире сӳтсе явать, çав ыйтусенех исполком ларăвĕсенче те темиçе хутчен пăхса тухнă. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ те хăйĕн ларăвĕсенче çав ыйтусем тăрăх пĕлтĕр тата кăçал хула Совет исполкомĕн ĕçĕсем çинчен решенисем йышăннă,—тет санэпидстанцин аслă врачĕ Смирнова юлташ.—Çапла ĕнтĕ хутсем нумай, ĕçĕ вара пĕр вырăнтах тăрать.

Исполком работникĕсем решенисем çырма, хитре сăмахсем калама юратни çинчен Карпова депутат та каларĕ.

Чăнах та, кама кирлĕ-ха ĕçне тумасăр сăмах парса ларни? Апрель уйăхĕнчех сесси исполкома Ярославский урамри çула хытарса туса ăна чугун çул станцине çитерме хушнăччĕ. Исполком çак ĕçе пурнăçламан. Богдан Хмельницкий урамĕнчи шыв колонкисем ĕçлемени çинчен çуркуннех каланăччĕ, вĕсем халĕ те ĕçлемеççĕ. Атăл урлă касса çӳрес ĕçе лайăхлатас пирки темиçе решени те йышăннă, анчах перевоза унччен епле япăх ĕçленĕ, халĕ те çапла ĕçлет. Кун пек тĕслĕхсене депутатсем нумай илсе кăтартрĕç.

Исполком председателĕ Енчиков юлташ та, унăн заместителĕсем Киселева Ижойкин юлташсем те, Гендельман юлташ та благоустройство ĕçĕсене тума хулари ĕçсыннисене явăçтарма кирли çинчен пĕрмаях калаçаççĕ. Калаçаççĕ, анчах явăçтармаççĕ. Ыйтас килет: исполком хăй ĕçсыннисене çав ĕçе çĕклемесĕр, камăн çĕклемелле-ха, исполком хăй пуçару кăтартмасан, çав пуçарăва камăн кăтартмалла-ха? Исполком пĕтĕм ĕçсыннисене ĕçе мобилизацилеме мар, депутатсемпе те кирлĕ пек ĕçлемест.

— Эпир, депутатсем, час-часах суйлавçăсем патĕнче пулатпăр,—тет Лупанова депутат.—Вĕсем пире ялан пулăшаççĕ, сĕнӳсем параççĕ, пирĕн умма ыйтусем лартаççĕ. Исполком, унăн пайĕсем вара çав ыйтусене, сĕнӳсене итлесшĕн те мар.

Хулари благоустройство ĕçĕсем çинчен пĕрмай шавлани пурне те йăлăхтарса çитернĕ ĕнтĕ. Çавăнпа та сессие пухăннă депутатсенчен хăшпĕрисем сесси вĕçленичченех тухса кайрĕç. Залра ларакансем хушшинче çакăн пек калаçнине илтмелле пулчĕ: «тепĕр çăл тăвас вырăнне кĕçĕр каллех тепĕр решени йышăнатпăр ĕнтĕ». Çакă тĕрĕсех: кам лайăх ĕçлет, çав хут сахалтарах çырать.

Хула Совет исполкомĕн руководителĕсем çакна ăнланма тивĕç: вĕсем—халăх суйланă çынсем, вĕсене халăх пысăк шанăç панă, вĕсен çав шанăçа тӳрре кăлармалла.

Ĕçе хутпа хупласси пăрахăçа кăлармалла вăхăт çитнĕ ĕнтĕ. Хуласенчи благоустройство ĕçĕсем питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пулса тăнине хула руководителĕсене кăçалхи июнь уйăхĕнче КПСС Центральнăй Комитечĕн РСФСР енĕпе ĕçлекен бюровĕ те кăтартса пачĕ. Çак ĕçе парти хушнă пек, халăх хушнă пек пурнăçламалла.

МЕХАНИЗАТОРСЕМШĔН ТĂРĂШАÇÇĔ

СОВЕТСКИ. МТС-ри механизаторсен культурăпа йăла условийĕсем лайăхланса пыраççĕ. Иртнĕ çулта кунта библиотека ĕçлеме пуçларĕ. Унта халĕ 2 пин кĕнеке ытла. Кăçал хĕрлĕ кĕтес уçрĕç.

Механизаторсен хваттерĕсене водопровод кĕртеççĕ. Çак кунсенче кунта фельдшер пункчĕ ĕçлеме пуçларĕ.

Я. СИГАЕВ.

РАДИОПА ПАРАКАН ПЕРЕДАЧĂСЕМ

Вырăнти вăхăтпа

Августăн 28-мĕшĕ

18.50—тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем тăрăх хатĕрленĕ передача. 19.05—промышленноçра ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ передача. 19.25—Украина халăхĕн аслă писателĕ Иван Франко çинчен йĕркеленĕ литература передачи.

Августăн 29-мĕшĕ

18.50—ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ передача. 19.10—поэт-юрăçă Илья Тукташ творчестви çинчен хатĕрленĕ передача.

ПĔЛТЕРНИ

Августăн 28-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекинче «ТĔНЧЕРИ ЛАРУ-ТАРУ ÇИНЧЕН» лекци пулать. Лекторĕ Эльбов юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор заместителĕ П. Н. НИКОЛАЕВ.

Кино

«РОДИНА». Августăн 26-мĕшĕнче кăнтăрлахи сеанссенче илемлĕ фильм «За власть Советов», каçхи сеанссенче—«Дерзкая девчонка».

Республикăри экрансем çинче

çĕнĕ кинокомеди

„БЕСПОКОЙНАЯ ВЕСНА“

кăтартма пуçлаççĕ

Сценари авторĕпе фильма лартаканĕ А. Медведкин.
Режиссерĕ С. Гурзо.
Композиторсем Е. Брусиловский тата В. Байкадамов.
Рольсене çак артистсем выляççĕ:
С. Гурзо, Р. Шорохова, Н. Гребешкова, В. Борискин тата ыттисем.
Алма-Ата киностудийĕ 1956 çулта туса кăларнă.

РЕДАКЦИН АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 2, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—[illegible], [illegible] пайĕ—5-64, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—5-97, культура пайĕ—5-94, совет строительстви пайĕ—13-37, литературăпа искусство пайĕ—6-81, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 13481.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Заказ № 2419. Тираж 29.000 экз.